Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухат.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 17 ВЫРСАРНИКУН 239 (4751)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Дежурнăйăн 6—23
Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88

Партири тата партире тăман чи лайăх большевиксене—суйлав комиççисене!

Суйлав умĕнхи пит пысăк ĕç пĕтĕм аслă совет çĕршывĕнче саралса пырат. Хуласенчи тата йалсенчи ĕççыннисем Сталинла Конституци тăрăх иртекен суйлав кампанине хутшăнаççĕ. Вуншар мĕлйун рабочисене, хресченсене, служăщисене, интеллигенцине пĕрлештерсе тăракан тĕрлĕрен общĕствăлă организацисем, профеççилĕ сойузсем, комсомол тата ыттисем те хускалса ĕçleме пуçларĕç.

Пирĕн партин Тĕп Комитечĕн çак иртнĕ кунсенче пулса иртнĕ Пленумĕн директивĕсем суйлав кампанине иртере çĕрте ĕçе татса парĕç. Пленум кăтартса панисене партири тата партире тăман большевиксен чи анлă сийĕсем патне çитермеле. Вĕсем организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандăлă ĕçсене халĕхи вăхăт ра кирлĕ пек сарăмлăхпа туса пымала тăваççĕ,—организацилĕ тата агитацилĕ-организацилĕ ĕçĕн çакăн пек сарăмлăхĕ вăл ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулас суйлавĕ тĕлне пĕтĕм çĕршывăн тимлĕхне мобилизацилеме, çĕр мĕлйун çын ытла суйлавçăсене суйлава хатĕрлесе çитерме кирлĕ.

Çак кунсенче вырăнсенче суйлав кампанин организацилĕ чи паха ыйтăвĕ, тĕп ыйтăвĕ тес пулат пулĕ, пурнăçа кĕрет —Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăмăн тата Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăмăн округри суйлав комиççийĕсене, тата участкăсен чи суйлав комиççийĕсене тăваççĕ. Округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен членĕсем пулма кандидатсем уйăрас пит пысăк, çав вăхăтрах пит тĕплĕ тумали ĕç пулса пырат. Рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенци —кашни суйлавçă суйлав комиççинче вĕсен кандидачĕсем çине çав тери пысăк ответлăх хурăннине уççăн пĕлсе тăма кирлĕ.

Суйлав комиççисене общĕствăлă организацисен тата ĕççынни общĕствисен, чи малтан профеççилĕ сойузсен, коммунисла организацисен, комсомолăн, предприйатисенче —заводсенче, фабриксенчи совхозсенчи рабочисемпе служăщисен колхозсенче—хресченсенчен пĕрлехи пухувĕсем уйăрнă представителĕсенчен тăваççĕ. Суйлав комиççийĕсен составне чи лайăх çынсене, социалисăмшăн активлă кĕрешекен боецсем иккĕнне кăтартнисене, политикăлă ĕçри опыт пуррисене кĕртес пулат. Мускаври „Серп и Молот" заводри рабочисемпе служăщисем хăйсем хушшинчен Молотов округĕнчи суйлав комиççине мастер-орденоносец Ильйина уйăрнă, вăл пысăк авторитетлă тата политика тăлăшĕпе тĕрĕсленнĕ йулташ. Сокольник районĕнчи медицинă работникĕсен пухувĕ пурте пĕр хаваслă пулса столицăн Чукунçул округĕнчи суйлав комиççине профессăр-общественник Ейниса, Мускав Совечĕн депутатне, уйăрнă.

Константиновкăра (Донецк облăçĕ) участкăри суйлав комиççи председательне Александра Гавриловна Котельниковăна уйăрнă, вăл йапонь-манчжурсемпе пулнă çапăçура паттăр вилĕмĕпе вилнĕ пиччĕшĕ Валентин вырăнне Хĕрлĕ çар ретне кайнă Петр Котельниковăн амăшĕ.

Парти организацисемпе совет руководителĕсем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне иртерес ĕçре суйлав комиççийĕсем пит те пысăк вырăнта тăнине ăнланса илнĕ çĕрте акă мĕнле çынсене уйăраççĕ округри тата участкăсенчи суйлав комиççисене. Анчах, суйлав комиççисене кандидатсем уйăрасси çине çакăн пек пăхни нумай çĕрте çукха.

Хăшпĕр облăçсемпе районсенче суйлав комиççи членĕсене тупса уйăрасси çине уççăнах йурлă мар, ку ĕçе виççĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хураççĕ. Хĕсĕк çамкалă дельагăсем, политикăла сисĕмлĕхе çухатнăскерсем, суйлав комиççисем çине суйлава организацилес тĕлĕшпе пит те пысăк тата ответлă ĕç тивнине манаççĕ. Час-часах вĕсем политикă тĕлĕшпе опытсăр, ĕçе тутанса пăхман, государствă йе общĕствăлă ĕçре хăйсене нимĕнпе те палăртман çынсене уйăраççĕ.

Тăшманла етемсем, суйлав комиççисем политикă тĕлĕшпе паха вырăнта тăнине ăнланса, хăшпĕр çĕрте, уйрăмах участкăсенче, суйлав комиççисен составне „хăйсен" çыннисене кĕртсе йама пăхаççĕ, хăшпĕр çĕрте вĕсем хăйсем тăвас тенине тăваççĕ те. Орджоникидзе крайĕнчи пилĕк районта участкăсенчи суйлав комиççисене тăратнă 81 кандидатран, 14-шĕ судпа айăпланнăскерсем, йе халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытса вараланнăскерсем пулнă. Çакăн хыççăн ĕнтĕ çав районсенчи парти работникĕсем сыхăлăх çинчен калаçни мĕне тăрат вара!

Совет çĕршывĕнче чиркуве государствăран уйăрнă, государствă влаçне организацилес ĕçре чиркуĕн нимĕнле ĕç те çук, пулма та пултараймаст. Çапла пулин те, тĕн сĕрĕмне саракан киревсĕр çынсем-те хăйсен çыннисене суйлав комиççисене кĕртсе йама пăрахăç мар. Çавна вĕсем саккунсăр ĕçсем пулакан вырăнсенче, парти организацисем начар ĕçлекен çĕрте, партире тăман массăсенчен уйăрăлса кайнă çĕрте çеç тума пултарнине чухласа илме йăвăр мар.

Суйлав комиççисене общĕствăлă организацисен тата ĕççыни общĕствисен представителĕсене уйăрасси совет демократийĕ, тĕнчери чи демократилĕ суйлав системи хушнă пек туса иртермеле. Кандидатсене уйăрас ĕçе массăсем хăйсем активлă хутшăнни кирлĕ,—çакă ĕнтĕ совет демократине пурнăçа кĕртмелли пĕррремĕш тата тĕп. условиĕ пулса тăрат. Çапла пулин те, хăшпĕр çĕрте çак ĕçе бўрократла „çавăрса хума", ĕçе массăна хутшăнтармасăр тума ĕмĕтленеççĕ. Шуйскри (Иваново облăçĕ) искусственнăй волокно фабрикинче суйлав комиççине кандидатурăсем тăратас ыйтăва кун йĕркин вĕçне, „тĕрлĕрен" текен ыйтусемпе пĕрле лартнă. Çак пит паха ыйтува пухуран нумайĕшĕ тухса кайнă хыççăн тин сўтсе-йавма тытăннă. Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Куйбышов райкомĕ суйлав кампани çине, вăл шутрах суйлав комиççисем тăвасси çине пăхни тата ытларах бўрократла пулса тăрат. Сентабĕрĕн 26-мĕшĕнче çав райком малтанах хатĕрлесе хунă комиççи председателĕсене (вĕсене кам тата хăçан суйлама ĕлкĕрнĕ!) хăшпĕр суйлав участкисене çакăн пек заданипе командировкăна йанă: пĕрремĕш, суйлав комиççисем тумала, иккĕмĕш, суйлавçăсен спискине тумала тата, виççĕмĕш, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренме кружоксем организацилемеле. Çак пысăк ĕçе тăватă кун хушшинче пĕтĕмпех туса пĕтерме хушнă. Çакă ĕнтĕ суйлав кампани çине партине хирĕçле пăхни пулмаст-и-ха? Суйлав комиççисене суйласа тупас ĕçре çакăн пек васкавлă мелĕсем, мĕн пуçламĕшĕнчен тытăнса вĕçне çитийех суйлав саккунне хирĕç пыракан метăдсем, тĕрĕссипе илсен, халăх тăшманĕсене провокацилĕ ĕç тума пулăшаççĕ.

Суйлав комиççисене кĕртме Ленин—Сталин парткишĕн тата совет влаçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшакан тўрĕ çынсене суйласа тупнă çĕрте халăх тăшманĕсем чăрмантараççĕ тата малала чăрмантарасси те паллах. Совет строителствин çирĕм çул хушшинчи опычĕ епĕр мĕн пур йăвăрлăхсемпе чăрмавсене, мĕн пур тăшмансене сирсе пынине, нимĕн чухлĕ чакмасăр малала кайнине кăтаратса тарат, мĕншĕн тесен коммунисcемпе пĕрле, вĕсемпе çумма-çуммăн тăрса, партире тăман ĕççыннисем мĕлйун-мĕлйунĕпе тата вуншар мĕлйунĕпе пыраççĕ. Суйлав кампани пынă вăхăтра парти кашни большевикла организацин, кашни коммунисăн ĕçне вĕсем хăйсен тавра тăракан партири мар çынсене пурне те коммунисла партин лозунгĕсемпе тата йалавĕсемпе пĕтĕçтерсе суйлавсене илсе пыма мĕн чухлĕ пултарнă тăрăх хаклат.

Ленинпа Сталин организацилĕ ыйтувăн тĕп тымарĕ—çынсене суйласа илнинче пулни çинчен пĕр хут мар кăтартса панă. Пур ĕç те кадрсенчен килет. Çак директивăна лайăх асра тытас пулат тата халĕ те, суйлав кампани вăхăтĕнче те пĕр чакмасăр ун тăрăх ĕçлесе пырас пулат. Тивĕçлĕ общĕствăлă организацисен комитечĕсен заседанийĕсенче тата рабочисен, колхозниксен, служăщисен пĕрлехи пухувĕсенче суйлав комиççисене кĕртме политикă йенчен шанчăклă, çирĕп çынсене уйăрмала—акă мĕн пысăк организацилĕ задачă пулса тăрат суйлав кампанин пайанхи тапхăрĕнче Нацилĕ республикăсенчи компарти Тĕп комĕсен, ПСК(б) Партин крайсенчи, облăçсенчи тата районсенчи организацисен хастарлă задачи вăл—округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççисен составне кĕртме кандидатсем суйласа тупас ĕçе чăн-чăнах большевикла йертсе пырасси пулат.

(„Правда" умстатйи, октябĕрĕн 16-мĕш).

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VII сессийĕ

Пайан, октябĕрĕн 17-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсе 2 сехетре, Саслă кинотеатрта УÇĂЛАТ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн парти группин ларăвĕ çавăнтах кăнтăрла иртсе 1 сехетре пулат.

Информацилĕ пĕлтерў

Октябĕрĕн 16-мĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум çак ыйтусене пăхса тухнă:

1) ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси çинчен,
2) Организацилĕ ыйтусем.

Пленум ПСК(б)П Обком бўровĕпе пленум составĕнчен — партирен кăларнă А. Н. Никитина кăларчĕ.

Çавăн пекех тата ПСК(б)П Обком составĕнчен Сымокинпа Селезньова кăларчĕ.

ПСК(б)П Обком пленум членĕн кандидатĕнчен А. Йа. Йаковлева, Коричева, И. Т. Терентйева, А. Х. Харитонова кăларнă.

Пленум хупă (вăрттăн) сасăласа Л. С. Спасов йултăша ПСК(б)П Обком бўровĕн членне суйланă.

Ленин-Сталин партийĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăнине кăтартакан демонстраци

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав кампанийĕ пуçланнине пирĕн Тăван Çĕршыври ĕççыннисем политикала активлăх калама çук çўле çĕкленнипе паллă турĕç. Нумай халăхлă митингсем çаплах пулса иртеççĕ; пиншер ĕççыннисем трибунă çиве тухаççĕ, вĕсем хамăрăн Тăван Çĕршывшăн хĕпĕртесе савăнни çинчен каласа параççĕ, телейлĕ пурнăçшăн коммунисла партине тата аслă Сталина тав тăваççĕ. Митингсенче йышăннă резольуцисенче ĕççыннисем суйлав кампанине кăтартулă иртерме, Сталинла Конституцине тата суйлав саккунне тĕплĕн вĕренме пулаççĕ.

„Аслă Совет суйлавĕ, — тесе çыраççĕ Харьковри трактăр заводĕнчи рабочисем митингра йышăннă резольуцире, — партири тата партире тăман большевиксемшĕн пысăк екзамĕн пулат. Епĕр революцилĕ сыхăлăха тата çўлерех хăпартатпăр, массăсем политикă тĕлĕшпе хунă шанчăка çухатнă пĕр çынна та влаçăн аслă оргăнне йамастпăр. Фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агентурине тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа тĕп тăватпăр. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали историлĕ куна производствăра çĕнĕрен çĕнтерўсем туса паллă тăватпăр. Суйлава гусеницăлă трактăрсем туса кăларас пройектлă пултарулăха алла илнипе кĕтсе илетпĕр. Хамăрăн çĕршыври социалисăмла уйхирсене чи лайăх та вăйлă çĕнĕ пиншер машинсем паратпăр. Суйлав кунĕ тĕлне рабочисем хушшинче тата вĕсен семйисем хушшинче хутла пĕлменлĕхе пĕтеретпĕр, ССР Сойузĕн кашни ăнлавулă гражданинĕ хăйĕн тивĕçлĕ ĕçне хăй тума пултартăр".

Дон тавринчи казаксем ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленийе пысăк хаваслăхпа сўтсе-йаваççĕ.

Цымлянски станицинчи (Ростов облăçĕ) суйлавçăсен пухувĕнче ватă казак Персидски йултăш сăмах тухса каланă. Вăл çапла калат: „Казаксем ĕлĕк мĕнле пурăннă-ха? Кулак-казаксем ирĕклĕ, пит лайăх пурăннă. Чухăн казак, хăш чухне вăтамми те пĕрмайах çав пуйансене вальли ĕçлесе пурăннă. Совет казачествин пурнăçĕ халь ĕнтĕ ĕлĕкхи пек мар, пĕтĕмпех ăрасна Пирĕн тăван коммунисла парти, халăхсен аслă çулпуçĕ аслă Сталин йертсе пынипе, казаксене телейлĕ те хаваслă пурăнăç патне илсе çитерчĕ. Колхозри казаксен халĕ амбарсем туллиш тырă пур. Пирĕн тĕрлĕрен продуктăсем ирĕккĕн тыткаламалăх пур. Колхозри казак культурăлă та пуйан пурăнат. Вăл Совета Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсене çеç суйласа йарат".

(ТАСС).

Йапони самольочĕсем англичансен машинисене пенĕ

ШАНХАЙ, 15-Х (ТАСС). Октябĕрĕн 12-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен тăватă сехет тĕлнеле, Шанхай çывăхĕнче йапонцăсен самольочĕсем çулпа пыракан виçĕ çăмăл машинăсем çине пулеметсенчен пенĕ. Машинăсем Нанкинран Шанхайа кайакanskерсем пулнă. Вĕсем çинче, — машинăсен англичансен флагĕсем пулнă, — англичансем çичĕ çын, вăл шутра Англи посольствин сотрудникĕсем те, ларса пынă. Пенĕ вăхăтра пĕр машини çинче ăнсăртран ССР Сойузĕн Китайри полпредствин çар аташе секретарĕ Шахов пулнă. Вăл Шанхайран Нанкина кайма тухнă та ирхине çичĕ сехет тĕлнеле Шанхайран 40 километрта авари тўснĕ. Шахов, Шанхайран чĕннĕ машинă пырасса кĕтнĕ çĕртен, çулпа иртсе пыракан англичансем кăмăллă чĕннипе уçă курса, вĕсемпе кайала Шанхайа кайнă. Машинăсем хуларан 12 километрта пулнă вăхăтра, сывлăшра йапонцăсен ултă самольочĕ курăннă. Самольотсене курсанах машинăсем чарăнна, пассажирсем çул çине тухса тăнă. Самольотсем льотчикĕсем лайăх курăнакан пуличченех айалта вĕçме пуçласан, виçĕ самольочĕ йе тăваттăшĕ машинăсем çине пулеметсенчен пеме тытăннă. Пассажирсем рис акнă уйра пытанма ĕлкĕрнипе çеç çăлăнса йулнă. Вунпилĕк минута йахăн вĕçсе çавăрăнса çўренĕ хыççăн, самольотсем Шанхай йенеле вĕçсе кайнă. Çав самольотсемех Шанхайран тăватă километрта консульствăн Шахова илме тухнă машинă çине пенĕ.

Совет Сойузĕ тăрăх

— Владимир Илйич Хусан университетĕнче вĕреннĕ чухне пурăннă çуртра музей уçаççĕ. Ку музей В. И. Ленинăн студент пулнă вăхăтĕнчи пурнăçне кăтартса парат.

— Аджарис—Цхальскăри гидроелектростанцине хута йанă. Октябĕрĕн 11-мĕшĕнче вăл станци Батумири вырăнти промышлĕнăç фабрикĕсемпе завочĕсене пирвайхи хут ток панă.

Республикăлă Испанире.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Долорес Ибаррури (Пассионарийа) Тĕп фронтри республикă боецĕсемпе пĕрле.

(Сойузфото).

Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округсенчи Суйлав Комиççисен составне çирĕплетесси çинчен

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Президиумĕ йышăннă постановлени

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" 41-мĕшпе 42-мĕш тата 43-мĕш статйисем тăрăх, Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Президиумĕ Сойуз Советне Чăваш АСС Республикĕнчен суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи Суйлав Комиççисен составне общĕствăлă организацисемпе ĕççынни общĕствисен çак представителĕсенчен çирĕплетме йышăнат:

Шупашкар Округĕнчи Суйлав Комиççи:

Шупашкар Округĕнчи Суйлав Комиççин председателĕ КАПЛИН Александр Сергейевич—Коммуналлă-пурăнмали çуртйĕр Строителствинчи Работниксен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Шупашкар Округĕнчи Суйлав Комиççин председателĕн заместителĕ СТЕПАНОВ Александр Степанович—Политикла-çутĕç учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Шупашкар Округĕнчи Суйлав Комиççин секретарĕ—МИХАЙЛОВ Андрей Михайлович—Государствă учреждениsенчи Работниксен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Шупашкар Округĕнчи Суйлав Комиççин членĕсем:

ИЛЙИН Александр Илйич—Шупашкар районĕнчи Коммунисла организацинчен,

ХАБАРОВ Николай Семенович—Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхоз колхозникĕсенчен,

ФЕДОРОВ Семен Федорович—Ишлей районĕнчи Коммунисла организацинчен,

ЙЕВДОКИМОВА Фекла Йевдокимовна—Çĕрпў районĕнчи „Большевик" колхоз колхозникĕсенчĕн,

ДМИТРИЙЕВА Йевдокийа Дмитрийевна —МТС Работникĕсен Кантăрти тата Центрти Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен,

АСТАФЙЕВ Сергей Фролович—Государствă учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацийĕнчен,

КАРАМЗИНА Пераскева Йаковлевна—Шупашкарти спирт заводĕнчи рабочисенчен, служăщисенчен тата инженерсенчен,

КАЛИНИН Антип Трифонович—Тутăркас районĕнчи Коммунисла организацинчен.

Канаш Округĕнчи Суйлав Комиççи:

Канаш Округĕнчи Суйлав Комиççин председателĕ АЛЕКСЕЙЕВ Иван Алексейевич—Политикăла-çутĕç учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Канаш Округĕнчи Суйлав Комиççи председателĕн заместителĕ МАЙОРОВ Павел Йермилович—Канаш районĕнчи Коммунисла организацинчен.

Канаш Округĕнчи Суйлав Комиççин секретарĕ ШАШКОВ Иван Дмитрийевич—Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Канаш районĕнчи организацинчен.

Канаш Округĕнчи Суйлав Комиççин членĕсем:

АЛЕКСЕЙЕВ Леонид Алексейевич—Трак районĕнчи „Правда" колхоз колхозникĕсенчен,

МАРТЫНОВ Йевстафий Тимофейевич—Йелчĕк районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсенчен,

АНТОНОВ Ильйа Николайевич—Куславкка районĕнчи Коммунисла организацинчен,

НИКИТИН Василий Йаковлевич—Государствă учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Канаш районĕнчи организацинчен,

ГУРЙЕВ Дмитрий Гурйевич—Вăрмар районĕнчи „Чувашский крестьянин" колхоз колхозникĕсенчен,

КУÇМИН Федор Куçмич—Канашри вагонсем йусакан заводри рабочисенчен, служăщисенчен тата инженерсенчен,

ВАСИЛИЕВ Борис Василйевич—Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн Чăваш организацинчен,

АШМАРИН Семен Осипович—Шăхасан районĕнчи Коммунисла организацинчен.

Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиççи:

Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиççин председателĕ КУÇМИН Александр Петрович — Государствă Суту-илў Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиççи председателĕн заместителĕ СТЕПАНОВ Федор Димитрийевич—Государствă учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиççин секретарĕ ТРИШКИН Карп Григорйевич — Хăма çуракан тата Йăвăç каскалакан Промышлĕнăç Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиççин членĕсем:

БРЕЙКИН Александр Иванович — Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Улатăр районĕнчи организацинчен,

АНДРЕЙЕВ Димитрий Андрейевич — Турхан районĕнчи Коммунисла организацинчен,

ПУДОВКИН Василий Михайлович — Политикла-çутĕç учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен,

ВАЛЕИЕВ Тухтамыш Фазрутдинович — ССР Сойузĕн Оборонине тата Авиацине Хими строителствине Пулăшакан Обшчĕствăн (Осоавиахим) Шăнкăртам районĕнчи организацинчен,

НАУМОВ Федор Гаврилович — Улатăр станцинчи депо рабочийĕсенчен, служăщийĕсенчен тата инженерĕсенчен,

ОСТРЙАКОВ Леонтий Давыдович — Патăрйел районĕнчи „Красные Тойси" колхоз колхозникĕсенчен,

СВЕШНИКОВ Иван Йевдокимович — Çĕрĕç Оргăнĕсенчи Работниксен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен,

БЕРЕЗИНА Иелена Василйевна — Пăрачкав районĕнчи Коммунисла организацинчен.

Çĕмĕрле Округĕнчи Суйлав Комиççи:

Çĕмĕрле Округĕнчи Суйлав Комиççин председателĕ ОСИПОВ Роман Иосифович — Пуçламеш тата вăтам шкулсенчи Работниксен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Çĕмĕрле Округĕнчи Суйлав Комиççи председателĕн заместителĕ МАТВЕИЕВ Петр Матвейевич—Çĕмĕрле районĕнчи Коммунисла организацинчен.

Çĕмĕрле Округĕнчи Суйлав Комиççин секретарĕ КОНСТАНТИНОВ Павел Константинович — Политикла-çутĕç учреждени Работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Çĕмĕрле Округĕнчи Суйлав Комиççин членĕсем:

ЧЕКМЕНЕВА Анисийа Семĕновна — Çĕмĕрле районĕнчи „Красноармеец" колхоз колхозникĕсенчен,

ФЕДОТОВ Куçма Федотович — Çĕмĕрлери йăвăç каскалакан комбинат рабочийĕсенчен, служăщийĕсенчен тата инженерĕсенчен,

НИКИТИН Александр Никитич — Йетĕрне районĕнчи Засурски совхозĕнчи рабочийсемпе служăщисенчен,

ПЕТУХОВА Йекатерина Александровна — Пăрачкав районĕнчи „Факел" колхоз колхозникĕсенчен,

ХРАМКИН Николай Максимович — Вăрнар районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсенчен,

ТОЛСТОВ Алексей Сергейевич — ССР Сойузĕн Оборонине тата Авиацине Хими строителствине Пулăшакан Обшчестăн (Осоавиахим) Чăваш республикĕнчи Тĕп Советĕнчен,

ПОЛТЕВ Петр Степанович — Йетĕрне районĕнчи Коммунисла организацинчен,

НИКАНДРОВ Клементий Никандрович — ССР Сойузĕн Оборонине тата Авиацине Хими строителствине Пулăшакан Обшчĕствăн (Осоавиахим) Елĕк районĕнчи организацинчен.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ А. ВАСИЛЙЕВ.

Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ Т. ВАСИЛЙЕВ.

Шупашкар хули. 1937 ç. октябĕрĕн 16-мĕш.

Аслă Совета мухтавлă патриотсене, Ленин-Сталин ĕçĕшĕн, ĕççыннисен телейĕшĕн, социалисăмла тăван çĕршывăн чысĕшĕн тата мухтавлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекен большевиксене суйлар

Суйлав кунĕ—савăнăçлă уйав

Чукунçул строительствинчи Аслă Çавал шывĕ урлă кĕпер тунă çĕрте, ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун çинчен кăларнă постановленине ырласа митинг пулса иртрĕ. Митинга 400 çын ытла пухăннă. Митинга пынă çынсем пурте постановленине пысăк кăмăлпа ырлаççĕ. Кĕпер тунă çĕрти платниксен бригадине йертсе пыракан паллă стахановецă Алексейев йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Епĕр телейлĕ те савăнăçлă çĕршывра пурăнатпăр. Сталинла Конституци тăрăх суйлав иртерни хамăрăн пуйанлăха малашне тата та вăйлăн ÿстерсе пыма май туса парать. Епĕр ку суйлава ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илетпĕр. Халĕхи вăхăтра епĕ нормăна 200 процент тултаратăп пулсан, суйлав тĕлне тата та ытларах тума пулатăп,—тет Алексейев йулташ.

Куславкка районĕнчи „Заря" колхозран пынă 63 çулхи Орлов йулташ çапла калать:

— Суйлав кунĕ маншăн савăнăçлă уйав пулса тăрать. Епĕ вăл уйава пуйан пурнăçпа пурăнма тытăннипе кĕтсе илетĕп. Кăçал епĕ колхозра 250 ĕçкунĕ турăм, халĕ чукунçул строительствинче ĕçлетĕп. Епĕр кунта суйлав Положенине тĕплĕн вĕренетпĕр, колхоза таврăнсан ун çинчен колхозниксене анлантарса паратăп, Аслă Совета тивĕçлĕ çынсене çеç суйлатпăр.

Митинг пысăк хаваслăхпа иртрĕ. Митинга пынă колхозниксем, рабочисем чукунçулне срукра туса пĕтерессишĕн хĕрÿлĕн кĕрешме пулчĕç.

С. П.

Суйлав кунĕ çинчен йышăннине стахановла ĕçленипе саламлаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Судоверфа чейемайсемпе шăвăнса кĕнĕ, техническĕ директăр пулса ĕçленĕ Муравйовпа инженер Уханов чылай вăхăт хушши баржăсем тăвас ĕçе пурнăçа кĕртессине чăрмантарса пынă. Вĕсем стахановла йухăма пусарнă. Савăт ĕçĕнче йурийех йĕркесĕрлĕхсем тунă.

Халăх тăшманĕсене—Муравйовпа Уханова—Судоверфран тасатнă хыççăн, рабочисем сăтăрçăсен йулашкисене хăвăрттăн пĕтерессишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем Аслă Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас кун тĕлне тултарма пулса, спирт савăчĕпе ăмăртăва тухрĕç.

Халĕ Судоверфра малтанхи пек нормăна тултармасăр ĕçлекенсем пачах çук, кашни рабочи кулленхи нормăна ирттерсе тултарать. Çакна пула Судоверф Октябĕр уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхри плана 139 процент тултарчĕ.

Октябĕрĕн 11-мĕшĕнче радио тăрăх ССР Союзĕн Аслă Советне суйлассине 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ирттермели çинчен илтсенех, Судоверфри рабочисем пуху туса иртерчĕç. Пухура ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун çинчен йышăннă постановленийе сÿтсе-йавнă хыççăн, рабочисем тата та лайăхрах ĕçлеме, Аслă Совета Ленинпа Сталин партишĕн ĕçлекенсене çеç суйлама пулчĕç.

Халĕ рабочисем хăйсен сăмахне ĕçпе çирĕплетеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна тата та ытларах иртерсе тултарма тытăнчĕç. Октябĕрĕн 13-мĕшĕнче А. Белов платник хăйĕн нормине 163 процент тултарнă. Çавăн пекех А. Плешников тимĕрç 203 процент, Кралечкин йулташ 172 процент, Николайев 158 процент, Сивовпа Смирнов йулташсем 179-шар процент тултарнă. Рабочисем çак вунăкунлăхра Мускав—Атăл каналĕ валли тума пуçланă баржăсене туса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Çапла вĕсем Суйлав кунĕ çинчен йышăннине стахановла ĕçленипе саламлаççĕ.

Производствăра лайăх ĕçленĕ вăхăтрах кулътурăлă-массăлă ĕçсене йĕркелес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Судоверфра техникăна, сыхăлăх ĕçне вĕренмели кружоксем организациленĕ, икĕ хор кружокĕ ĕçлет. Вĕсем 6—7 хутчен концерт панă та ĕнтĕ.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренмели кружоксем 11 çĕрте организациленĕ. Ку шутран 5 кружокра кил-хуçи хĕрарăмĕсем вĕренеççĕ. Кружоксенче занятисем ернере 2-шер хут пулса иртеççĕ. Кунсăр пуçне ирхине ĕç умĕн, кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче политкалаçусем туса иртереççĕ.

В. Васийлев.

Суйлав кунне пысăк çитĕнÿсемпе уйавлатпăр

(Чăвашстройтрестпа Чăвашпройект работникĕсен митингĕ йышăннă резолюцирен)

ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ ССР Союзĕн Аслă Советне суйлассине 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче иртерме йышăннине хĕрÿлĕн ырласа, хамăрăн йуратнă аслă çулпуçне, Сталин йулташа, тата хăватлă коммуниссен партине савăнăçлă кăмăлпа вĕçĕ-хĕррисĕр ыра-сунса саламлатпăр.

Социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма ÿстерсех пырса, илнĕ обйазательствăсене пурне те Октябĕрти Аслă Социалисăмла революци 20-мĕш уйавĕ тĕлне пурнăçа кĕртсе çитермеле тăватпăр.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес ĕçе вăйлатса пырса, хамăр коллективри çынсене çеç мар, вĕсен çемйинчи çынсене те суйлав кунĕнче хăйсен граждăн обйазаннăçĕсене пĕлсе тата йăнăшсемсĕр пурнăçа кĕртме вĕрентсе çитеретпĕр. Аслă Совета коммуниссен парти ĕçĕшĕн кĕрешекен, пур йенĕпе те пысăк пахалăхлă çынсене суйлассишĕн сасăлатпăр.

Аслă уйава—декабĕрĕн 12-мĕшне ăмăртупа ударничествăна вăйлатса пынипе, хамăрăн производствăла ĕçре пысăк çĕнтерÿсем тунипе уйавлатпăр.

Чемейсен пысăк ÿсĕмĕсем

Чемейри „Сеятель" колхоз (Тутаркас р.) районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Колхоз халĕ Октябĕр революци 20 çул тултарнă йачĕпе пыракан ăмăртуа хутшăнса пысăк çитĕнÿсем турĕ. Колхоз октябĕрĕн 10-мĕшне 35-шер лаша вырнаçмалăх икĕ вите туса çитерчĕ. Октябĕр уйавĕ тĕлне чиркÿрен пăсса клуб туса çитереççĕ. Клубра тĕрлĕрен пÿлĕмсем пулаççĕ: вулав пÿлĕмĕ, хатĕ-лаборатори, радио трансляци пулать. Колхозри 72 çулти Андрейев Василийĕ: „Епĕр вăл çуртра нумай хăрампыр пупĕсемшĕн укçа-тенкĕ пĕтернĕ, малашне çав клубра епĕр ирĕклĕн канма пултаратпăр",—тет.

„Сеятель" колхоз председателĕ пулса Андрейев Евтихи ĕçлет. Андрейев пур ĕçе те лайăх организацилет. Колхоз çентăбĕрĕн 20-мĕшне патшалăх умĕнчи мĕн пур парăмсене пĕтĕмпех тÿлесе татнă.

ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели займа 2385 тенкĕ çырăннă, укçине те пĕтĕмпех тÿленĕ.

Колхозра 48 хуçалăх пĕрлешсе тăрать. Иртнĕ çулта колхоз 135 гектар çĕр çинчен 1375 центнер тĕш тырă туса илнĕ, кăçал çав çĕр лаптăкĕнчен 2423 центнер илчĕ.

Колхозăн тупăшĕ ÿссех пырать, кăçал колхоз уйхиртен 29.410 тенкĕ, сысна ферминчен 35.500 тенкĕ, кирпĕч производствинчен 4.000 тенкĕ, тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçсенчен 15.000 тенкĕ тупăш илет.

Колхозра стахановецă-ударник семйисен хисепĕ те ÿссех пырать. Иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Андрейев Николай йалхуçалăхĕнчи пур ĕçе те ăнăçлă иртерчĕ. Уйăм участкисене: вăрлăхлăх ыраш участкинче 27 центнер, сĕлĕ 37,52 центнер илнĕ. Унăн çемйи 810 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕ çине 8 килограм тĕш тырă, пĕрер тенкĕ укçан илет. Çапла майпа 405 пăт тĕш тырă, 810 тенкĕ укçан, 220 пăт çĕрулми илет. Васийĕн Леонти колхозри сысна ферминче свинар пулса 1934 çултанпа ĕçлет. Вăл 89 сысна çурине лайăх пăхса ÿстерчĕ. Унăн сыснисем 60—65 килограм тайать. 1937 çул хушшинче пĕтĕмпе те 2 сысна çури кăна вилчĕ. Унăн çемйи 613 ĕçкунĕ тунă, ĕçкунĕсемшĕн вăл 295 пăт тĕш тырă, 613 тенкĕ укçан илет.

Колхоз председателĕ—Андрейев Е. 1931 çултанпа комсомолта тăрать. Вăл йертсе пыма пĕлни колхоза пысăк ÿсĕмсем патне илсе пырать.

Андрейев ку таранччен пулнă çитĕнÿсемпе лăпланса лармасть, вăл татах та çĕнĕ кăтартулă ĕçсем тăвассишĕн кĕрешет.

М. Исайев.

Суйлава хатĕрленетпĕр

Епĕр, Шăхасан районĕнчи машинă-трактор станци çумĕнчи 3-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи трактористсем, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулакан суйлава хастарлăн хатĕрленетпĕр. Кашни апат умĕнех политкалаçу туса илетпĕр. Суйлав Положенине Конституцин статйисене сÿтсе-йавса вĕрентпĕр. Трактористсем суйлав Положенине питĕ интересленеççĕ. Хăйсем пĕр-пĕрне ыйтусем парса, кам мĕн чухлĕ пĕлнине тĕрĕслеççĕ. Трактористсем апат пĕçерсе паракансене суйлав çинчен анлантарса пачĕç.

Ваттисен хушшинче халăхи суйлавпа ĕлĕкхи суйлавсем çинчен ытларах калаçаççĕ.

— Ĕлĕкхи суйлавра епĕр тухса та курăнман, халĕ пире питĕ пысăк демократи пачĕç. Совет влаçĕ пирĕн пурнăçа йусама çул уçса пачĕ. Епĕр совет аппаратне халăх тăшманĕсене суйлас çук, хамăр пек ĕçлекен ударниксене, халăхшăн тăрăшакансене суйлатпăр,—теççĕ.

Спиридонов.

Колхозниксем кружоксенче

ТУТАРКАС. Ворошилов йачĕпе тăракан колхозри кружоксене вĕренме колхозниксем активлă çÿреççĕ.

Кружокра вĕрентмĕ Г. Львов агитатăр лайăх хатĕрленсе пырать. Кашни занятине 60-шар çын ытла пулать. Колхозниксем ку йенпе интересленни кашни занятинчех нумай ыйтусем панинчех аван курăнать. Анланман вырăнсене лайăхрах ыйтса пĕлме тăрăшаççĕ.

Кружоксен занятийĕсем ернере пĕр хут пулса иртеççĕ.

К. Пушкин. А. Алексейев.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Епĕр, çĕрĕçкелÿпе мелиораци техникумĕнчи студентсем, хамăр шефа илнĕ колхозсенче „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" анлантарса патăмăр.

Ф. Уткин.

* * *

ÇĔРПУ. Сиччарахри „КИМ" колхозра „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренмелли кружоксен занятийĕсене вулав çуртĕнче пуçлăхĕ Иаковлевпа туллимар вăтам шкулти учителсем иртереççĕ. Колхозниксем суйлав саккунне питĕ вĕренесшĕн интересленеççĕ, вĕсем занятисене пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Колхоз-

* * *

ТĂВАЙ. Çĕнĕ Пуйанкассинчи „Большевикла колхозăн" колхозра суйлав Положенине лайăх вĕренсе пыраççĕ.

Илйин агитатăр йалти активистсемпе хĕрарăмсем пухувĕнче виçĕ хутчен „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" çинчен каласа анлантарчĕ. Çавăн пекех йалти актив хушшинче виçĕ хутчен колхозниксен хушшинче пĕр пуху туса иртерчĕ. Вĕсем унта йут çĕршыври суйлавпа хамăр суйлав уйрăмлăхĕсене тата вăрттăн суйлавăн тĕп задачисем çинчен ытларах чарăнса тăнă.

Ал. Пикишкин.

Çĕнелчĕ йал, аванланчĕ пурнăç

ÇĔРПУ. 40 çул авал Йандуш йалĕ пĕчĕк, чухăн йал пулнă. Пÿртсем пĕчĕккĕ, тăррисене улăмпа витнĕ, çуркунне вара пÿртсем тăррисĕне куракçем шăтса тухатчĕç. Чылайĕшĕн хура пÿртсем пулнă. Йалта кулътурă саракан йапаласем нимĕн те пулман, хут пĕлекенсем 4—5 çынтан ытла йулман. Çеминаринчен вĕренсе тухни те пĕр Иван Абрамăч анчах пулнă. Çĕр çынран 85 çын трахом чирĕпе чирлесе асап, хĕн-хур курнă. Больницасене çÿресе чиртен хăтăлма май пулман, больницасенче сыватнăшĕн тухтăрсене укçа-тенкĕ нумай тÿлемеле пулнă. Халĕ йалта мĕн пурĕ те 45 çын трахомпа чирленисем, вĕсене те Октябĕр уйавĕ тĕлне сыватса çитерессипе йалти трахпункт вирлĕн ĕçлет. Вĕсем трахпункта çÿресе трахом чирĕнчен сываласçĕ. Трахом чирĕпе чирленисен йышĕ кунран кунах чакса пырать.

Октябĕр революци пулсан тин йала çутă пурнăç килсе кĕчĕ. Революци пулнăранпа çулран çул ытларах вĕрене пуçларĕç. Йалти хресченсен пурнăçĕ те йалтах улшăнчĕ, чухăн хресченсем колхоза пĕрлешсе телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Пуйан та кулътурăлă пурăнма пуçларĕç. Кашни киле хаçат килсе тăрать, колхозниксен килĕнче чечексем çитĕнеççĕ, портретсем пÿлĕме илемлетеççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра сăмаварсем, занавескăсем, сехет-тенкĕлсем, тимĕр кроватсем сайра хутра çеç тĕл пулма пултарнă пулсан, халĕ вĕсем кашнин пекех пур. Йалта велосипедсем нумай. Революци пулнăранпа нумай ăстаçăсем вĕренсе тухрĕç: зоотехник 3 çын, учител 5, вылăх тухтăрĕсемпе фелдшĕрĕсем 2, трахработник 4, шофер-трактористсем 3; аслă шкул вĕренсе тухнисем 3 çын, техникум пĕтернисем 12 çын тата институтра 2 çын вĕренеççĕ. 25 çын ытла тĕрлĕрен учрежденисенче ĕçлеççĕ. Пайанхи куна йалта хутла сахал пĕлекенсем 34 çын, вуçех те пĕлменнисем (50 çула çитиччен) 14 çын, вĕсене те вĕрентсе çитерессипе колхоз çумĕнче ваттисен вăтам шкулĕ организациленĕ, халĕ ку шкулта 30 çын вĕренеççĕ.

Йалта, халĕ кулътурлă фронтра ĕçлекен çынсен çарĕ калама çук пысăк. Учителсем, кулътурă секци членĕсем, стена хаçат редакторĕсем, тĕрлĕрен кружок руководителĕсем 120 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте халăх кулътурлăхне хăпартассипе тăрăшса пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозăн çĕнĕ пысăк клуб пур, ăна 1936 çулта тунă, залăна 300 çын ытла кĕрет. Унтах тĕрлĕрен кружоксем: хор, драмкружок, музыкă кружокĕ т. ыт. те. Кăçалхи çул драмкружок членĕсем: „Анисса", „Йалта", „Судра", „Нарспи", „Айдар" драмăна вылъаса панă, кружок руководителĕ Иванов Платон тăрăшса ĕçлет. Ваттисен хор кружокĕ (руководителĕ Ф. Охотников) чăвашла 30 йурă, вырăсла: „Спой нам ветр", „Песня о родине", „Песня о Сталине", „Конармейская", „Партизанская" йурăсене йурлама вĕреннĕ. Струннăй оркестр кружокĕ те аван ĕçлет.

Колхозниксем кану вăхăтне савăнăçлă иртереççĕ. Клуба пухăнса тĕрлĕрен хаçат-журналсем вулаççĕ. Тата колхозăн библиотекă пур, унта 200 кĕнеке ытла шутланать. Шашкă-шахмăт, балалайкă, хуткупăс та пур. Çамрăксем пурте хуткупăспа выляççĕ.

Массăлă-анлантару ĕçĕ те аван пулса пырать. Пĕтĕм йал халăхĕ ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине вĕренет, колхозĕпе 8 кружок организациленĕ.

Колхозăн пурнăçĕ пуйанланса пынине те кăтартса хăвармала. Колхозра пурĕ 148 хуçалăх шутланса тăрать, 694 га çĕре пĕрлештернĕ. Çĕре агротехникă кăтартнă пек çемçетсе, унтан тупăш илесси кашни çул ÿссе пычĕ, колхоз пуйанланса çитрĕ.

Колхозăн вылăх-чĕрлĕхсене усрама витесем çутелĕклĕ, шыв, çăм арманĕсем пур тата грузовик туйанна.

Çапла вара Йандуш йалĕ Октябĕр революци пулнăранпа 20 çул хушшинче тĕпренех улшăнчĕ. Çакăн пек пурнăç патне илсе пыраççĕ Сталинла Конституцин ĕçлев, кану, вĕрену прависем.

П. Иванов.

М. Семенов семйи 1000 ĕçкунĕ тунă

ÇĔРПУ. Лĕпсер йалсоветĕнчи „Çĕнĕ вăй" колхоз кăçал нихăçанхинчен ытла вăйлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем ĕçре пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, колхозри ĕçсене вăхăтра туса пĕтерчĕç. Октябĕрĕн 14-мĕшĕнче аван çапса пĕтернĕ.

Кашни ĕçкунĕ пуçне çур пăт тĕш тырă, çур пăт çĕрулми тата 30 пусран кайа мар укçа тивет. Çапла колхозри хастарлă ĕçлекен колхозниксем 500 пăт таран тĕш тырă ĕçлесе илеççĕ.

М. Семенов колхозник çемйи 1000 ĕçкунĕ туса 500 пăт тĕш тырă, 500 пăт çĕрулми, 300 тенкĕ ытларах укçа илет.

Вăл ытлашши тырра сутса кулътурăлă таварсем илме шутлать.

Й. Петров, С. Павлов.

Андрейĕв семйи 600 пăт илет

Елĕк районĕнчи Тават колхоз кăçал нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕ. Уйран ăнăçулă пуçтарса кĕртсе авăн çапса пĕтерчĕ. Колхозниксен савăнăçĕ, ĕçлес кăмăлĕ калама çук пысăк. Пĕрремĕш бригадăри Андрейев Георги çемйи 1120 ĕçкунĕ туса 600 пăт тĕш тырă илет. Аванс йĕркипе панă 250 пăт тырра Андрейева колхозăн автомашинипе леçсе патăмăр.

Соловйов.

М. Н. Данилов-Чалдун

МАНМИ КУНСЕМ

1917-мĕш çул. Октябĕр уйăхĕ. Çанталăк сăнĕ пĕтĕмпех улшăннă. Пылчăклă урамсем шурă кĕççепе витнĕ пек шапшурă йурпа витĕннĕ. Урамра никам та курăнмасть. Тĕрме ăçта иккенне камран та пулин ыйтса пĕлес шухăшпа çиçстанцă йеннеле васкаса утатăп.

Çанталăк çав тери илемлĕ. Анчах хула пушă пек туйăнать. Çыннисем ăçта кайса пĕтнĕ-ши. Теп, ецĕр лазаретра выртнă вăхăтра пурне те фронта хуса кайса пĕтернĕ. Çынсем пулмала. Трубасенчен тĕтĕм кăтраланса тухать. Сывлăшра туттă апат-çимĕç шăрши тăрать. Ав ăçта, тепĕр урамра халăх шавлани илтĕнет.

Ак, ман ума пĕр çамрăк çын сиксе тухрĕ.

— Ей, йулташ!—кăшкăрса чартăм епĕ ăна.

Çамрăк çын утма чарăнмасăр, ман çине çавăрăнса пăхрĕ те:

— Мĕн кирлĕ сире?

— Есĕр тĕрме тĕлне пĕлместĕр-и?—тесе ыйтрăм.

Çамрăк çын чарăнчĕ:

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана, ларса пăхас тетним?—терĕ вăл йуптарса.

— Унта ман йулташ ларать. Çавна курса пулмĕ-ши? тетĕп...

— Мĕн ĕçпе. Вăрăшăн-и, политикăшăн-и?

— Вăл большевик.

Çамрăк çын ман патарах утса пычĕ.

— Большевик? Халĕ тĕрмере цĕр большевик те çук. Вĕсене пурне те вакунсем çине тийенĕ. Урăх хулана куçараççĕ. Йо леш тĕнчене ăсатаççĕ. Паллă мар. Йулташна çăлас тесен йулă аллуна мар, пăшал тытас пулать. Вăхăтлăх правителствăна çĕмĕрмеле. Анланатăн-и,—терĕ çамрăк унăн-кунăн пăхкаласа.

— Епĕ лазаретра выртакан суранлă салтак. Ăçтан илес ман пăшал? Кам патăр?

— Ак çак тăкăрлăкпа кĕрсе кайсан, сылтăм йенче икĕ хутлă кирпĕч çурт пур. Çăвăнта Хĕрлĕгварди отрйадне çыраççĕ. Пăшал та параççĕ,—тесе тăвăр тăкăрлăк йенне кăтартрĕ мана çамрăк çын. Урăх вăл манпа калаçса тăмарĕ, станцă йеннеле васкаса утрĕ. Епĕ çамрăк çын сăмахне итлесе, çав тăвăр тăкăрлăка кĕрсе кайрăм.

Тĕрĕс. Нумайах та утмарăм, хай çамрăк çын каланă икĕ хутлă çурт патне çитрĕм. Пăхатăп. Килкарти тулли салтаксем, рабочисем, хĕрарăмсем. Пурте хĕçпăшаллă, пилĕкĕсем тавра пулемет лентисем çавăрса çыхнă, кăкăрĕсем çине, хăщĕсем çĕлĕкĕсем çине хĕрлĕ лентăсем çакса йанă.

Çурт айĕнче подвал. Алăкĕ йар уçă выртать. Унтан çĕклемĕ-çĕклемĕпе пăшалсем, патрон йешчĕкĕсем йатса тухаççĕ. Пăшалсене, патронсене тин пыракансене валеçсе параççĕ.

— Йулташ! Кашни çĕр патронран ытлашши ан илĕр. Мĕншĕн тесен пурне те çиттĕр,—тесе кăшкăрса тăрать пĕр артилĕрис шинелĕ тăхăннă салтак.

— Пăшаларсене лайăх тишкĕрсе пăхăр. Çĕмрĕкки ан лектĕр, йулташсем,—тесе ăсăрхаттарать тепĕр рабочи.

— Йулташсем, кам çырăнман, пăшал иличчен малтан çыранса, хĕрлĕгвардейец билетне илĕр,—тесе пĕлтерет пуçне карттус тăхăннă пĕр хĕрарăм.

Подвал алăкĕ умĕнче сĕтел. Сĕтел хушшинче икĕ салтак ларăççĕ. Вĕсенчен пĕри çĕнĕрен пынисен хушаматне ыйтса çырать. Иккĕмĕшĕ ала-пусса, хĕрлĕгвардейец билетне парать:

— Ме йулташ. Асту, ан çухат. Ансăртран тыткăна лексен ан кăтарт, пĕтерме тăрăш,—тесе астутарать.

Мана та черет çитрĕ. Хушамата ыйтса çырчĕç. Хĕрлĕгвардейец билетне пачĕç. Пăшал илтĕм. Хай картуслă хĕрарăм ман кăкăр çине хĕрлĕ лентă çакса йачĕ.

— Халĕ ĕнтĕ есĕ салтак мар, хĕрлĕгвардейец,—терĕ хĕрарăм кĕскен сăмах татса.

Малала мĕн пуласса кĕтетĕп. Ман пĕтĕм шухăш Грачова шыраса тупасси. Урамра курнă çамрăк çын каланă тăрăх, большевиксене урăх хулана ăсатма вакунсем çине тийенĕ пулсан,—иккĕленмели çук, вăл та унта.

Каланчча вуниккĕ çапрĕ: „Ăх, манăн вĕт лазарета таврăнмала. Мана кăларса йанă сестра кĕтсе тăрать пулĕ. Мана хулана кăларса йани çинчен тухтăр пĕлсен, мĕн кăтартрĕ ăна, мĕскĕне. Чĕрĕллех тытса кăшлĕ". Çапла шухăш çитсе кĕчĕ пуçа.

— Йулташсем! Кам станцăна, вакун çине тийенĕ большевик йулташсене хăтарма кайас тет, малала тухăр!—тесе кăшкăрчĕ пĕр сасă.

Халăх ушкăнĕ сасă йенеле шыв хумĕ пек кал сулăнчĕ.

— Чернов йулташ, есĕ пойăс çинчи большевиксене хăтаракан отрйад начальникĕ пулатăн. Хупа пĕрле çĕр аллă хĕрлĕгвардейец ил те, васка хăвăртрах.

— Станцăна!—илтĕнчĕ тепĕр сасă.

Пирĕн ума сăран пиншаклă, шурă çĕлĕклĕ, хура уссиллĕ, патвар çын тухса тăчĕ:

— Манпа пырас текенсем, икшерĕн-икшерĕн тăрăр,—хулăн сасăпа командă пачĕ вăл.

Епĕ ун çине куçа чарса пăхатăп. Хама-хам ĕненместĕп: „Çавă. Çук вăл мар", шухăшлатăп. Каллех куçа илмесĕр пăхатăп. Паллаймастăп.

Вăл та ман çине тинкерсе пăхрĕ. Палларĕ:

— Давыдов, есĕ вĕт ку?

— Епĕ. Чернов йулташ, есĕ вĕт?

— Епĕ,—иккĕн ыталанса чуптурăмăр.

— Ну, каллех пĕрле. Айта большевик йулташсене хăтарма.

— Айта!

Пирĕн отрйад станцă йенне пырать. Лазарет умĕнчен иртетпĕр. Мана лазаретран кăларса йанă сестра хапха умĕнче, епĕ таврăнасса кĕтсе тăрать. Стройран тухса ун патне: „Ан кĕт", тесе пĕлтерме чупса пытăм. Сестра ман çине тĕлĕнсе пăхать:

— Давыдов, есĕ мĕн, ухмаха йертĕним. Лазаретран йусанса тухмасăрах каллех фронта кайатăн. Йăлăхтармарим-ха вăрçă,—тесе вăрçса тăкрĕ мана.

— Çук, сестра. Епĕ халь фронта каймастăп. Большевик йулташсене хăтарма кайатăп. Епĕ ăçта кайни çинчен Хамит йулташа пĕлтер. Ан çухаттăр вăл мана. Ме, çак çырăва пар,—тесе сестра аллине çыру тыттартăм та, отрйад хыçĕнчен чупрăм.

Сестра ним ăнланаймасăр, тĕлĕнсе пăхса йулчĕ:

— Каçхине таврăнатни?!—тесе кăшкăрчĕ хыçалтан.

— Таврăнап!—тесе кăшкăртăм хыçалала пăхса.

Отрйад станца çитрĕ. Пойăс вакзал умĕнче тăрать. Хускалса кайма паравосĕ те хатĕр.

— Йулташсем пойăса çавăрса илĕр!—командă пачĕ Чернов.

Пĕр минутра пуйăса ункăпек çавăрса илтĕмĕр. Вакун алăкĕсем умĕнче хурал тăракан Вăхăтлăх правителствă салтакĕсем пире сывăха йарасшăн мар. Хирĕç тăраççĕ:

— Сывăха ан килĕр!—кăшкăраççĕ.

Станцă начальникĕ хăйĕн флагĕпе малала сулать. Ку ĕнтĕ пойăса хускалса кайма хушать. Анчах паравоз хускалмасть.

— Пăрăнăр вакун алăкĕсем патĕнчен. Унеăрăн халех персе пăрахатпăр!—тесе кăшкăраççĕ хĕрлĕгвардейецсем.

Салтаксем парăнмаççĕ. Пăшалĕсене хатĕр тытса пирĕн çине тĕллеççĕ.

— Отрйад, пли!—командă пачĕ Чернов.

Çĕр аллă пăшал сасси харăс ухлатрĕ. Пулькисем салтаксен пуçĕсем çийĕне шăхăрса кайрĕç. Салтаксем, хăраса ÿкнĕскерсем, пăшалĕсене çĕре пăрахрĕç.

Çавăнтах хĕрлĕгвардейецсем чупса пырса, салтаксене вакунсем çинчен сĕтĕрсе антарчĕç те, вакун алăкĕсене уçса йачĕç.

—Ирĕке тухăр йулташсем!

— Ур-р-ра-а! Пролетарилĕ революци сывă пултăр!—сасăсем йантăраса кайрĕç.

Тĕмисĕ уйăх хушши Вăхăтлăх правителствă тĕрминче выçăлă-тутăлă асапланса пурăннă большевик йулташсем вакунсенчен сике-сике тухаççĕ. Пур йенчен те революцилĕ йурă йурлани илтĕнет:

Смело, товарищи, в ногу,

Духом окрепнем в борьбе...

Епĕ вакунтан вакуна чупса Грачов йулташа шыратăп:

— Грачов хушаматлă большевик курчĕ-и сирĕнне пĕрле?—тесе ыйтатăп.

Тĕмисĕн пĕлекен пĕри те çук. Хăшĕ пур теççĕ, хăшĕ—çук.

Вакунтан вакуна кĕрсе икĕ хут çаврăнтăм. Çук. Шанчăк пĕтрĕ. Грачова тупаймарăм. Виççĕмĕш хут тĕплĕн пăхса çÿретĕп. Чи хыçалти вакуна кĕтĕм. Грачова тупрăм. Вăл тиф чирĕпе чирленĕ. Кĕтессе кĕрсе выртнă та аташать.

— Чернов йулташ. Пирĕн взводнăй командир Грачов йулташ та кунта,—тесе пĕлтертĕм.

Чернов вакуна чупса кĕчĕ:

— Халех лазарета леçĕр ăна. Анчах шанчăклă алла парăр. Революцийе хирĕç пыракан тухтăрсем ăна тĕп тума та пултарĕç,—терĕ Чернов.

— Йурĕ.

Çавăнтах тепĕр хĕрлĕгвардейецпа икĕ винтовкăран насилке турăмăр та, Грачова вырттарса лазарета йатса кайрăмăр.

Хулара вăхăчĕ-вăхăчĕпе пăшал сассисем йанăраса кайаççĕ.

— Хĕрлĕгвардейецсем йункерсене çĕмĕреççĕ,—тесе утать ман йулташ.

Рабочисем хĕрлĕ йалавсемпе ирте-ирте кайаççĕ.

Лазарета çитес чух Грачов тăна кĕчĕ. Вăл пуçне çĕклесе ман çине тинкерсе пăхрĕ те:

— Давыдов, есĕ вĕт ку?

Аташать пулĕ тесе, епĕ хирĕç чĕнмесĕр пыратăп.

— Давыдăв, мĕншĕн чĕнместĕн. Ăçта йатса кайатăр есĕр мана.

— Лазарета.

— Мĕншĕн? Мĕн айăп турăм епĕ сире?

— Есĕ чирлĕ. Çавăнпа йусанма лазарета леçетпĕр.

— Епĕ чирлĕ? Суйатăр. Çук, епĕ чирлĕ мар, сывă. Долой Вăхăтлăх правителствă!—кăшкăрса йачĕ Грачов. Хăй çавăнтах насилкке çинчен сиксе анчĕ.

М. И. Калинин

СОВЕТ ИНТЕЛЛИГЕНЦИЙĔ

1894 çулта Ленин интеллигенци составĕ çакăнтан килет, тесе çырнă: общичĕствăра „капиталист патшаланса тата тытса тăрат“ пулсан, вара интеллигенцире „карйериссен тата буржуазине тара кĕрĕшнĕскерсен хăвăртрах та хăвăртрах ÿссе пыракан ушкăнĕ тон парат“ [1]).

Интеллигенцин çÿлти скийĕсем—шултра чиновниксем, врачсем, адвокатсем—хăйсен тымарĕсемпе шултра капитализмла тата помещикле елементсемпе тачă сыхăнса тăнă. Çав интеллигенци çинчен Ленин кĕскен калат: вăл „кам хăйне тăрантса пурăнакана çеç шырат“ [2]). Камха ăна тăрантса пурăнма пултарнă? Кам патне лекнĕ-ха вăл службăна? Пит ăнлаймала ĕнтĕ, вăл пуçпулса тăнă пуйан классем патне службăна лекнĕ; унăн вĕсене служит тумала пулнă—„мĕншĕн тесен унăн урăхла май та пулман“ [3]).

Пирĕн кивĕ интеллигенци хăйне классем çийĕнче тăраканскер, пĕтĕм халăхăн интересне палăртса тăраканскер, тесе шутланă. Ун çинчен иртнĕ вăхăтра нумай çырнă. Тĕрĕссипе вара унăн чи демократилĕ пайĕ те халăхăн вакбуржуалă сийĕсен интересĕсене палăртса тăнă тата хÿтĕленĕ. Паллах ĕнтĕ, çакăнпа епĕ интеллигенци хăй хушшинчен халăхăн ĕçĕшĕн кĕрешнĕ борецсем кăларман тесе каласшăн мар.

Революци пуличченхи вăхăтра интеллигенцин тĕп пайĕн витĕрех буржуалă мировоззрени пулнă. Иртнĕ вăхăтри интеллигенцин составне аса илĕр-ха. Фельдшĕрсем рйадовой хресченсем йе рабочисем хушшинчен тухнисем те хутран-сыхтран тĕл пулкаланă, анчах вĕсем хăйсен фельдшĕрла образованине полксенче илнĕ. Йалсенче вĕсене, кулса ĕнтĕ, „лаша фельдшĕрĕсем“, „коновалсем“, тесе чĕннĕ: акушеркăсем вара вакбуржуалă сийсем хушшинчен, пуринчен ытларах кулаксен çемйисенчен тухнăскерсем пулнă. Учительсен тĕп масси пупсен, кулаксен, вак чиновниксен тата ыт. ачисем пулнă. Вăтам хресчен семйинчен тухнă учитĕле, чухăн семйе çинчен епĕ каламастăп та ĕнтĕ, пит сайра хутра çеç тĕл пулма пулнă.

Интеллигенцин çак демократилĕ пайĕ хăйĕн положенипе йалăн пуйан тăррипе чи çывăхрах сыхăнса тăнă. Куна ак çак простой фактран та шухăшласа илме пулат: кирек те мĕнле чиркÿ праçникĕнче те йалта учитĕл, фельдшĕр, хуçа-тимĕрç, мельник тата ыттисем те, йаланах тес пулат, пуйан хресченсем патне пуханнă.

Интеллигенци пĕтĕмĕшпе илсен халăхран пит инçетре пулнă, 70-мĕш çулсенчи „халăх хушшине çÿренĕ“ народовольцăсем çине те халăх улпутсен представителĕсем тесе пăхнă, вĕсене, пуçпулса тăракан классем хушшинчен тухнăскерсем тесе, шанман тата хăшпĕр чухне влаçсене тытса панă.

Вырăс интеллигенцин, уйрăмах унăн демократилĕ пайĕн положенийĕ, патша Российĕнчи ытти халăхсен интеллигенцийĕ çинчен епĕ ĕнтĕ каламастăп та, трагедиле пулнă. Демократиле интеллигенци, патша влаçĕн тата реакциле помещикле земствăн органĕсенче службăра пăхăнса тăмали вырăнта пулса, халăхăн пысăк хĕнхур тÿснине курнă, анчах ăна чăннипе пулăшма пултарайман. Тата çитменне вăл чăннипе мĕн тумалине те пĕлмен. Вăл самодержавине хирĕç, пĕтĕм капиталисăма хирĕç кĕрешÿн çулпуçне тăма пултаракан класа, рабочи класа, курман. Вырăс интеллигент-демократăн çак трагизăмĕ пĕтĕм вырăс литературинче уççăн палăрса тăрат.

Чи малта пыракан, революциле шухăшлă интеллигенци халăх йенне куçса пынă, рабочи класăн революциле йу-хăмĕн малалахи аталанăвĕ унăн чи лайăх ывăлĕсене кĕрешекен пролетариатăн, ăслăлăхлă социалисăмăн идейисемшĕн вĕçне çитиччĕнех кĕрешекен пĕртен пĕр борецăн ĕречĕсене кĕртрĕ.

Интеллигенцин чылай пысăк пайĕ буржуалă-капиталисăмлă стройшăн тăни большевиксем влаçа тытса илнĕ чухне уйрăмах хытă палăрчĕ. Интеллигенцисем ес-ерсен, меньшевиксен тата ытти авантурисла-политикăла ушкăнсен, алла хĕçпăшал тытса совет влаçне хирĕç кĕрешнĕ çав ушкăнсен, ĕречĕсене кĕрсе тулнăччĕ. Интеллигенцин чылай пысăк пайĕ, нумайрахăшĕ мар пулсан, совет влаçне саботаж тунипе кĕтсе илнĕччĕ.

Капиталиссене тата капиталисăмла патшалăха служит тума хăнăхнă интеллигентсем: „пирĕнсĕр ĕç кăлараймаççĕ“, тесе шухăшланă. Анчах вăл пустуй ăсвĕçни çеç пулнă. Октябĕр революци пĕр çулталăк тултарнă йатпа пулнă савăнăçлă ларура Ленин çапла каланă: „Рабочи клас вăл интеллигенцисĕрех тата капиталиссемсĕрех промышленнăçа организацилеме пĕлнине кăтартрĕ“ [1]).

Влаçа пролетариат тытса илнĕ вăхăтранпа 20 çул иртрĕ. Халĕ кивĕ интеллигенци, унăн чи нумайрах пайĕ совет влаçĕн позицийĕ çине çирĕппĕн тăнă та, тÿрĕ кăмăлпа, пĕтĕм халăхпа пĕрле социалисăм строительствине хутшăнса ĕçлет. Унпа йунашар, вуншар, çĕршер пин çамрăк специалиссем, рабочи клас тата хресченсем хушшинчен тухнисем, совет стройĕн условийĕсенче ÿссе çитĕнниссем ĕçлеççĕ. Совет çĕршывĕн çак çĕнĕ интеллигенцийĕ халăхпа таччăн, тÿрех, ÿтпÿпе тес пулат, çыхăнса тăрат.

Рабочисемпе колхозниксен ачисен пуçламĕш шкултан вĕренсе тухсан малала вĕренме права пур. Права пур çеç мар, вĕсене вальли вăтам шкулта, унтан аслă шкулта малала вĕренме пур майсене те туса панă, унта вĕрентессине çеç мар, вĕренекенсене усрассине те пĕтĕмпех государство çине илнĕ. Пирĕн çĕршывра кашни çамрăк çын, кирек хăш социаллă сийрен тухнă пулсан та, аслă шкула вĕренме кĕме пултарат. Вăтам шкултан „отличнo“ вĕренсе тухнисем аслă шкулсене конкурсла екзаменсемсĕрех вĕренме кĕме пултараççĕ.

Пирĕн интеллигенцийе „халăх хушшине çÿрени“ текеннине туни ниме те кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл хăй халăхăн уйăрăлми пайĕ пулса тăрат, халăхăн интересĕсемпе тата ĕмĕчĕсемпе пурăнат. Пирĕн студент „халăх хушшине çÿрет“ теме çук, вăл каникул вăхăтĕнче хăй çуралса ÿснĕ çĕре, хăйпе тăван çынсем хушшине кайат. 1937 çулхине çула Малайа Перепешчина йалĕнче, Харьков облаçĕнчи Новосержанск районĕнче, 50 çынна йахăн студентсем—çав йалти колхозниксен ывăлĕсемпе хĕрĕсем капса пурăннă. Çак пĕр фактах хăй хушшинчен хăйĕн интеллигенцине ÿстерсе пыракан пирĕн халăхăн культурăлă пурнăçĕнче çав тери тарăн улшăнусем пулнине ăнлапса илме пит çителĕклĕ.

Пирĕн интеллигенци пит телейлĕ условисенче пурăнат, çакна хăйулăн калама пулат. Вăл халăхпа чи таччăн çыхăнса тăрат, вăл унпа пĕрле социалисăм строительствинче, коммунисăм идейисене пурнăçа кĕртес çĕрте хутшăнса ĕçлет. Совет специалисĕ социалисăм строительствинче рйадовой боец пулса çеç мар, тата организатăр, йертсе пыракан пулса ĕçлет. Совет интеллигенцин творчествăлă ĕçĕ, буржуалă çĕршывсенчи пек, капиталиссен пуйас интересне пăхăнса тăмаст. Пирĕн патра, Совет çĕршывĕнче, вăл пĕтĕмпех халăх интересĕшĕн ĕçлет. Пирĕн интеллигенци безработицăна пĕлмест, пирĕн патра интеллигентлă ĕç работникĕсем ытлашши пулни çук, а капиталисăмла çĕршывсенче пуринче те вăл ытлашши. Пĕтĕмпех урăхла, пирĕн государство рабочисене пурне те инженерлă-техниклă работниксен çÿллĕшне хăпартма тăрăшат.

Çакăн пек ĕнтĕ интеллигенцин—наукăра, техникăра, искусствăра ĕçлекен çынсен положенийĕ. Совет влаçĕ чухне тин вăл хăйĕн дарованине пĕтĕмĕшпе сарса йама тата пĕтĕм чĕререн тăрăшса халăхшăн ĕçлеме май илчĕ.

1) Ленин, т. 1, стр. 189.
2) Çавăнтах, стр. 145.
3) Сталин, ССР Союзĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă доклад, стр. 12, Партиздат, 1936 ç.

1) Ленин, т. XXIII, стр. 243.



„ССР Союзĕн граждăнĕсен канăç прави пур“... Вăл правана ытти правасемпе пĕрлех, Сталинла Конституци çине çырса çирĕплетсе хунă. Нумай йышлă санаторисемпе канмали çуртсем çав правана пурнăçа кĕртме май параççĕ.

Совет влаçĕ пулнăранпа 20 çул çитет. Çак çирĕм çул хушшинче çĕршер санаторисем, канмали çуртсем, здравницăсем шăтса ÿсрĕç. Вунпĕр Союзлă республиксенче тĕрлĕ вырăнсенче питĕ лайăх санаторисемпе канмали çуртсем туса лартнă. Страхкассă шучĕпе кăна иккĕмĕш пйатилеткăра 16 мĕлйун ытла ĕççыннисем санаторисемпе канмали çуртсенче пулнă. Социалă страховани фончĕ 2,8 мĕлйард (1931 ç.) тенкĕрен 9 мĕлйард тенке çити ÿснĕ (1936 ç.). 1937 çулта вăл цифр 10,6 мĕлйард тенке çитрĕ. Çак цифрăсем — пиреншĕн Сталин тăрăшнине уççăн кăтартса параççĕ.

Укерчĕк çинче: Донбас шахтĕрĕсем Красногорскри канмали çуртра. Вăл çурт Украинăри чи паха вырăнсенчен перинче — Донец шывĕ хĕрринче.

Бондаренко фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Мыслецри хăма çурса арчасем тăвакан завод Аслă Октябĕр революци XX çул тултарнă йатпа иртекен социалисăмлă ăмăртăва хутшăнчĕ.

Завод августри плана 97,6 проц. анчах тултарнă пулсан, çентябĕрти плана 123,2 проц. тултарчĕ. Çапла вара продукци кăларасси те, иртнĕ уйăхсемпе танлаштарсан, сентябĕрте 48,2 проц. ÿсрĕ.

Заводра 78 рабочи ĕçлет, вăл шутран Октябĕр умĕнхи ăмăртăва 37 рабочи хутшăннă, вĕсем хăйсем хушшинче ăмăрту догăварĕсем тунă.

Ăмăртăва хутшăннă рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне те ÿстереççĕ. Рамă бригади (бригадирĕ Мартынов) çентябĕрти плана 115,4 процент тултарчĕ.

Арча тумали хăмасене çыхас çĕрте 5 çын ĕçлеççĕ, вĕсенчен Баганов, Марухин, Мохин йулташсем çентябĕрти плана 180 процент тултарса, çĕнĕ ÿсĕм турĕç.

Çапла ĕнтĕ, завод хăйĕн август уйăхĕнчи планне тултарайман пулсан, çентябĕрте уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса плана ытлашшипех тултарчĕ. Пайанхи куна заводра 8 стахановцă, 14 ударник шутланат. Стахановцăсем кунран кунах ÿсеççĕ, çĕнĕрен çĕнĕ ÿсĕмсем туса Аслă уйава çитĕнÿсемпе, пысăк хаваслăхпа кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Рабочисем хушшинче суйлав саккунне вĕренме 7 кружок организацилесе, пурне те йавăçтарнă. Кунсăр пуçне килхуçи хĕрарăмĕсене те (27 çын) суйлав саккунне вĕрентме кружок организациленĕ. Вĕсем пурте çĕнĕ суйлав саккунне тăрăшса вĕренеççĕ.

Октябĕрĕн 13-мĕшĕнче, ССРС Тĕпĕçтăвкомĕ „ССР Союзĕн Аслă Советнĕ суйламали кун çинчен“ кăларнă постановленине рабочисем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илсе, пуху туса иртерчĕç.

— Епĕр халĕ икĕ паллă ĕç патне çывхаратпăр. Пĕри вăл—Октябĕр уйавне кĕтсе илесси, тепри—суйлав çывхарса килет. Суйлава хатĕрленмели кампани пуçланчĕ. Пирĕн хĕрсех ĕçлемеле, рабочисем хушшинче хутпĕлменлĕхе çĕр проценчĕпех пĕтермеле. Культмассăлă ĕçе вăйлатмала. Суйлав Положенине вĕренесĕр пĕр рабочи те йулмала мар. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ историре пулман чаплă кун пулса тăрат. Епĕр çак историлĕ куна, тата Аслă Октябĕр уйавне нихăçан пулман çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр,—терĕ Спиридонов рабочи. Кун хыççăн, рабочисем, ССРС Тĕпĕçтăвкомĕн постановленине ырласа, хăйсем çине çакăн пек обйазательствăсем илеççĕ:

1. Хутпĕлменлĕхе рабочисем хушшинче тĕпренех пĕтерес, ку ĕçе тума йатарласа кружок уçмала.

2. Техникăлă кружоксем уçса, техминимума вĕренмеле.

3. Пур рабочисене те Аслă уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнтармала.

4. Аслă Совета суйлама вирлĕн хатĕрленсе çитмеле.

5. Халăх тăшманĕсене тата вĕсен йулашкийĕсене тĕпренех кăклаcа çапса аркатмала.

Мозйаков.

Телейлĕ ачасем

Ултă вĕтĕр-шакăр ача. Тумлантарса çитерме те çук. Пысăк ĕç хушма та çук вĕсене. Çулталăк кайарах çиччĕмĕш ача çуралнă—Антонинă, тесе йат хунă ăна. Степан Игнатйевичпа арăмĕ ачасене пăхса ÿстерессшĕн хытă тăрăшнă, çĕр çывăрмасăр тенĕ пек чăпта çапнă.

Иртнĕ çулта нумай ачалă çемйесене укçа парса пулăшасси çинчен правительства саккун кăларчĕ. Степан Игнатйевичăн семйи Антонинăшăн пособи илме тивĕçлĕ пулчĕ. Пилĕк çул хушши çулталăкра иккшер пин тенкĕ укçа илсе тăрат. Пĕлтĕрпе кăçал пĕтĕмпе 4 пин тенкĕ илнĕ ĕнтĕ. Степан Игнатйевич арăмĕ вĕçĕ-хĕррисĕр савăнат:

— Спаçибă Сталин йулташа, пирĕн телейлĕ ачасене пăхса ÿстерме пулăшнăшăн,—тет вăл.

Степан Игнатйевичăн ачисем шкулта вĕренеççĕ. Вĕсене лайăх тумтирсем илсе панă.

Г. Серебрйаков.

„Алино“ колхоз, Ишлей районĕ.

Суйлав кунĕ тĕлне çулталăкри плана тултаратпăр

Чăвашвăрмантрестри рабочисемпе служăщчисем ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун çинчен кăларнă постановленине ырласа митинг туса иртерчĕç. Митинга пуханнă рабочисемпе служăщчисем суйлава декабĕрĕн 12-мĕшĕнче иртерме йышăннине хапăлланса, пурте пĕр кăмăлпа суйлав кунĕ тĕлне çулталăкри плана тултарма йышăнчĕç.

М. Т.

Сĕнĕ клуб

Шупашкарти педрабфак Шупашкар районĕнчи Кĕçĕн-Карачурари колхоза шефа илнĕ. Епĕр шефа илнĕ колхоза йаланах пулăшса пыратпăр. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче кашни уйăхрах шефа илнĕ колхоза кайса вечерсем, докладсем туса параттăмăр. Иртнĕ çулхине колхозăн клуб çукчĕ. Кăçал колхоз 150 çын кĕмелĕх пысăк клуб туса лартрĕ. Клубĕ таса, çутă, аслă.

Октябĕрĕн 5-мĕшĕнче епĕр, педрабфакра вĕрентекенсемпе вĕренекенсем, шефа илнĕ колхоза кайса, çĕнĕ клуб туса пĕтернĕ йатпа, вечер туса патăмăр. Пире колхозниксем ăшшăн, кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Епĕр çитнĕ çĕре çĕнĕ клуба ватти-вĕттипех тулса ларнă. Вечер пуçланиччен И. Куприйанов преподаватель ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положени çинчен доклад туса ăнлантарса пачĕ. Доклад пĕтнĕ хыççăн педрабфакри драмкружок членĕсен вăйĕпе Н. Айзман çырнă „Çÿпçипе хупăлчи“ йатлă 1 пайлă комедине выльаса пачĕç. Спектакль хыççăн литкружок членĕсем сăвăсем каласа пачĕç. Ун хыççăн хор кружокĕн членĕсем тĕрлĕ йурăсем йурларĕç. Йулашкинчен вăйăсем выльаса кăтартрăмăр. Курма пынă колхозниксем вечера чĕреренех ырларĕç.

Ф. Галкин.

Хаçат витринисем тунă

Улатăр хула совечĕ ĕççыннисем, студентсем тата служăщчисем ыйтнипе кашни урамсенчех хаçат витринисем тунă. Çак витринăсем çине кашни кулленех центăрта, республикăра тата районта тухакан хаçатсене улăштарса тăраççĕ.

Çавнашкалах транспăрт ĕçне вĕренмели комбинатра та хаçат витринисем тунă.

Халĕ Улатăр хулинчи ĕççыннисем, студентсем, служăщчисем витринăсем патĕнче иртсе çÿренĕ вăхăтра хаçатсене вулаççĕ.

Хаçат çакмали витринăсене кашни колхозрах тумала.

А. Иванов

—Вăхăтлăх правительствă çук ĕнтĕ, йулташ Грачов. Пĕтĕм влаç Советсен аллине куçнă. Питĕрте Советсен иккĕмĕш сйесĕ уçăлнă,—ăнлантарса пачĕ ăна йулташ.

— Урр-аа! Ленин йулташ сыв пултăр!—кăшкăрса йачĕ Грачов. Хăй, вăйсăрскер, тайкаланат.

Чăнах та епĕ чирлĕ. Вăй çук. Леçсĕр хăвăртрах лазарета,—тесе хăйех наçилке çине пырса выртрĕ.

Лазарет хапхи умне йатса çитертĕмĕр. Пире хирĕç сестра чупса тухрĕ:

— Мĕн, суранлă салтав йатса килтĕрим!—тесе ыйтрĕ сестра.

—Суранлă мар, тифпа чирлĕ.

—Лазаретра вырăн çук. Урăх пĕр çынна та йышăнма хушмарĕ тухтăр,—терĕ сестра.

—Вырăн пур. Епĕ хам вырăна выртаратăп ăна. Уç хапхана,—терĕм сестрана.

Сестра хапхана уçса йачĕ.

Унтан наçилке çинче выртакан Грачов çине пăхрĕ те:

— Ваççа, Ваççук. Чунăм, есĕ вĕт ку?!—кăшкăрса йарса Грачова ыталаса илчĕ сестра.

— Нинă. Есĕ те кунтаим?—хуллен пăшăлтатрĕ Грачов. Сестра Грачовăн йуратнă хĕрĕ мĕн иккен.

— Уралран мĕнле кунта килсе лекрĕн?—тесе ыйтрĕ Грачов?

— Есĕ большевик иккене пĕлсен, мана ĕçрен кăларса йачĕç. Хватере туртса илчĕç. Ниçта пурăнма çуккипе сана шыраса фронта тухса кайрăм. Çак станцăна çитрĕм те, малала йамарĕç. Вара вăхăтлăха çак лазарета сестра пулса ĕçлеме кĕтĕм,—тесе каласа пачĕ Нинă.

—Халĕ ĕнтĕ епĕ вилĕмрен хăтăлтăм. Манăн тавра манăн чи çывăх çынсем—йулташсем. — терĕ савăнăçлăн Грачов. Вĕри сывлăшпа типнĕ тутисене йăл култарчĕ.

Грачов йулташа Нинăпа Хамит аллине патăмăр та, йулташпа каллех отрйада тавăрăнтăмăр.

— Грачов шанчăклă алăра. Вăл савнă хĕрĕпе Хамит аллинче,—тесе пĕлтертĕм Чернова.

—Пит аван. Ну, Давыдов йулташ. Пирĕн кĕтни çитрĕ. Российăра пролетарилĕ революци çĕнтерчĕ. Анчах çав революцийе сыхлама пирĕн хуть те хăççан та хатĕр пулас пулат.

— Епĕ хуть те хăçанта революцишĕн тăма хатĕр.

— Унпа сахал-ха.

—Тата мĕн кирлĕ манран.

— Пролетари ĕçĕшĕн кĕрешес тесен, малти ĕретре, большевиксен партинче тăрас пулат.

Епĕ Чернов сăмахĕсене ăнланаймастăп.

—Епĕ большевиксен хĕрлĕгварди отрйадне çыраннă вĕт. Тата мĕн кирлĕ.

Хĕрлĕгварди отрйачĕ вăл парти мар,—кулса илчĕ Чернов.

— Тата мĕн?

—Вăл, вăл контрреволюцийе хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешекен отрйад. Ăна большевиксен партийĕ йертсе пырат. Çав йертсе пыракан отрйада çыранас пулат. Ăнлантăн-и?

Епĕ тин ăнлантăм.

—Апла пулсан мана та çыр.

—Анчах епĕ сана çырма пултараймастăп. Ăна парти комитетĕнче çыраççĕ. Епĕ сана партине кĕме рекомендаци пама пултаратăп,—терĕ Чернов.

Епĕ савăннипе ним тума пĕлмесĕр Чернов аллинчен йарса тытрăм:

— Тавта-пуç сана кунщăн!—кăшкăрса йатăм. Хута илтĕм те, парти комитечĕ йенне савăрăнса утрăм.

Капиталисăмла çĕршывсенчи хресченсен пурнăçĕ

Çĕр çук

Капиталисăмла çĕршывсенче пурăнакан халăхран чи нумайăшĕ вăл—хресченсем. Капитал пуç пулса тăракан пур çĕршывсенче те картинă пĕр пек: хресченсем çĕр çук пирки нуша тÿссе пурăнаççĕ. Çĕр улпутсен, чиркÿсен, фабрикантсен, кулаксен аллинче. Çĕршер мĕлйун хресчен хуçалăхĕсен хăйсен çемйисене тăрантарса пурăнмалăх та çĕр çук.

Тĕслĕхе фашисла **Германийе** илсе пăхăпăр.

Çуршар гектартан та сахал çĕрпе усă куракан хресченсем 2.700 пин хуçалăх.

Çур гектартан пуçласа, икĕ гектара çитиччен çĕрпе усă куракан хуçалăхсем 849 пин.

Икĕ гектартан пуçласа 5 гектара çитиччен çĕр тытакан хуçалăхсем 797 пин.

Çак тăватă мĕлйун хуçалăх пурĕ пĕрле Германири пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен 10 проценчĕпе çеç усă курат.

Çав вăхăтрах Германире хуçалăх пуçне 100 гектартан та ытларах çĕр тытса тăракан хуçалăхсем 34 пин. Вĕсем улпутсем, чиркÿсем, фабрикантсем, кулаксем. Германири пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен 37,8 проценчĕ çак хуçалăхсен аллинче тăрат.

Германири 412 улпут хуçалăхĕ 2,5 мĕлйун хресчен хуçалăхĕ чухлĕ çĕр тытса тăрат.

Çак улпутсенчен нумайăшĕ—графсем, князсем, герцогсем. 1918 çулти революци Германири кайзерсене, князсене илсе антарчĕ, анчах „вĕсен“ пурлăхĕсене тĕкĕнмерĕ. Вĕсем халĕ те Германири çĕрĕн чи пысăк пайне йышăнса тăраççĕ. Акă çакна кăтартакан тĕслĕхсем:

Çĕр тытакансен йачĕсем	Мĕн чухлĕ çĕр тытаççĕ (гектарпа)
Вильгельм II Гогенцоллерн, Германи императăрĕ пулнăскер	97.043
Фридрих Леопольд, Прусси принцĕ	25.042
Фридрих Август, Саксони королĕ пулнăскер	21.947
Фридрих Виктор, княç Гогенцоллерн-Зигмаринген	46.036
Христиан Крафт, Гогенцоллерн-Ерринген княç	48.221
Енгельберт, Марийа, герцог	29.300
Фридрих, герцог фон Аренберт-Нордкирхен	27.842
Фридрих, герцог фон Ангальт-Дессау	29.300
Христиан Ернст фон Стольберт-Вернигорде	36.739

Англире ку вăхăтченех пĕтĕм çĕр дворйансен йахĕсен аллинче тăрат. Çĕрĕн пысăк пайĕпе нимĕн те усă курмаççĕ, вĕсенче ухатана çÿреççĕ, лордсем алхасса пурăнаççĕ.

Венгрире пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен хресченсем аллинче 11 процент çеç. Улпутсем пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен 66 процентне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. 100 пин гектар ытла çĕр тытса тăракан улпутсем те пур.

Австрире çĕр тытса тăракансен шутĕнче улпутсем 1,4 процент, анчах вĕсем пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен 46 процентне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Хресченсен аллинче пурĕ те 6 процент çеç.

Польшăра та çавăн пекех. Радзивиллы, Сапеги князсем, пансем чи лайăх çĕрсене çавăрса илнĕ. Хресченсене чи начар çĕрсене панă.

Йапонире çĕр тытса тăракан пĕтĕм хуçалăхсенчен улпутсем пĕр процент çеç, анчах вĕсен аллинче 26 процент ытла çĕр пур. Йапони императăрĕпе унăн семйи мĕлйун çур гектар ытла çĕр тытса тăраççĕ. Икĕ мĕлйун хресчен хуçалăхĕн кашни хуçалăха аран-аран çур гектар çĕр тивет. Вĕсен пурин çĕрне пĕрле шутласан та, императăрпа унăн семйи тытса тăракан çĕртен нумай сахал. Хресченсен виççĕ пайĕн пĕр татăк çĕр те çук, ыттисем те çур гектартан пуçласа пĕр гектара çитиччен çеç çĕрпе усă кураççĕ.

Буржуалă ытти çĕршывсенче те ĕç çавăн пекех тăрат. Улпутсем çĕрĕн чи нумай пайне, чи лайăххисене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, хресченсем хăйсен ĕмĕрне пĕчĕк татăк çĕр çинче асап тÿссе иртереççĕ.

Капиталисăмла çĕршывсенче хресченсене мĕнле улталаççĕ

Çĕре тĕрĕс мар валеçнипе хресченсем тахçанах килĕшмен. Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче, салтак шинелĕсене тăхăннă хресченсене: вăрçă чарăнсанах сире улпутсен çĕрĕсене касса парăпăр тесе улталанă.

Вăрçă чарăннă хыççăн, капиталисăмла пур çĕршывсенче те ĕçхресченсене улталама государство чиновникĕсенчен комиççисем тунă пулнă. Спискăсем, плансем тăвасси пуçланса кайнă. Темиçе кун пă хут çырса пĕтернĕ. Кун хыççăн çĕнĕ комиççисем тунă, çак комиççисем улпутсен çĕр участкисенчен хресченсене раççе пама йурăхлине, вĕсем мĕн чухлĕ тăнине сăнаса пĕлом пекки тунă. Çапла темиçе çул хушши шавланă, анчах ĕç малала кайман, хресченсем çĕр илеймен.

Темиçе çул хушши шавланă хыççăн улпут çĕрĕсенчен пăртаках касса илсе хресченсене валеçсе парам пекки тунă. Анчах çакăншăн та улпутсене патшалăх пысăк укçа тÿленĕ. Улпутсенчен патшалăх сутăн илнĕ çĕр хресченсене лекмен: офицерсене, чиновниксене, жандармăсене, кулаксене лекнĕ. Çав çĕрсенчен ĕç хресченĕсем кăштах илнĕ пулин те, вĕсем ăна хăйсен аллинче тытса тăма пултарайман. Вĕсен çĕр ĕçлемели хатĕрсем, ĕç выльăхĕсем пулман, çĕрне илсенех хресченсем парăма кĕрсе кайнă. Аран-аран ĕçленĕ çĕр çинче тырпул çулран çул начарланса пынă. Çапла вара налогсем тÿлеменшĕн хресченсен çĕрне йе патшалăх, йе ростовщик туртса илнĕ. Хресченсем каллех çĕрсĕр тăрса йулнă. Çапла ĕнтĕ, хресченсем халĕ те, ĕлĕкхи пекех, çĕр сахаллипе аптраççĕ. Çĕр выçлăхĕ йулашки 20 çул хушшинче тата вăйланса кайнă, хресченсем темиçе мĕлйун çын нимĕнсĕр тăрса йулнă.

Хресчене усламçă тата фабрикант çаратат

Тĕнче вăрçи хыççăн пур капиталисăмла çĕршывсенче те хресченсен пурнăçĕ начарланнă. Уйрăмах Америкăри, Австралири хресченсен пурнăçĕ хытă начарланнă. Кунта тĕнче вăрçи пынă çулсенче тĕш тырăсем ăкакан çĕр лаптăкĕ нумайланнă. Мĕншĕн тесен, вăрçăри çара çăкăр тата аш-какай кирлĕ пулнă. Вăрçа хутшăннă çĕршывсем апат-çимĕç продуктисемшĕн хаклă тÿленĕ. Çакна май çĕре хакла сутма тытăннă. Çапла вара хресченсем пысăк парăма кĕнĕ. Анчах вăрçă чарăнсан, йалхуçалăх продуктисене сахал илекен пулнă. Йалхуçалăх продук-

Йулашки 4-мĕш страницăра

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Тӗпри (Мадрид) фронтӗнче октябӗрӗн 14-мӗшӗнче республиканцӑсен ҫарӗсем Куеста де ла Рейна йалӗ районӗнче фашиссен тӑватӑ атакине сирсе пӑрахнӑ. Ҫав тӑватӑ атакӑна фашиссен ҫарӗсем Андалузи чукун ҫулӗнчен 35 километрти высота ҫине тунӑ пулнӑ. Республиканцӑсен ҫарӗсем ку высотаран хӗвеланӑҫ йенеле малала кайнӑ. Ҫапӑҫу уйӗнче фашиссен вилнисем тата аманнисем 500 ҫын ытла вуртса йулнӑ.

Мадрид фрончӗн главнокомандуйушчийӗ генерал Миаха каланӑ тӑрӑх, вӑрҫӑри операцисем республикӑ командованийӗн планӗсем тӑрӑх пулса пыраҫҫӗ. Республиканцӑсем икӗ кун хушшинче 200 ҫын ытла тыткӑна илнӗ.

Республика влаҫӗн аллинчи сведӗнисем тӑрӑх, фашисла Италин командованийӗ октябӗрӗн 28-мӗшӗнче Мадрид ҫине наступлени тума шухӑшлат.

Октябӗрӗн 14-мӗшӗнче фашиссен самолйочӗсем каллех Валенси ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Хӗвелтухӑҫ (Арагони) фронтӗнче, Тури Араговинче, республиканцӑсен ҫарӗсем тӑшмана хытӑ тапӑнаҫҫӗ. Фашиссем пысӑк подкреплени илнӗ пулин те, пуҫарулӑх республиканцӑсен аллинче. Республиканцӑсем кунта темиҫе йал туртса илнӗ.

Арагони фронтӗнче октябӗрӗн 12-мӗшӗнче республиканцӑсен авиацийӗ пит активлӑ ӗҫленӗ. Фашиссен 12 самолйот пӗтнӗ, вӗсенчен ултташӗ республиканцӑсен территорине ӳкнӗ. Италйанцӑсен пилӗтчикне тыткӑна илнӗ, вӗсем Итали ҫарӗнче действительни службӑра тӑраканскерсем пулнӑ. Октябӗрӗн 15-мӗшӗнче ирхине, республиканцӑсен авиацинчи 50 самолйота йахӑн пӑлхавҫӑсен Гаррапапинилйосри (Сарагоссӑ провинцинче) аэродромӗ ҫине вӗҫсе пынӑ. Ҫав аэродром ҫине пӑлхавҫӑсем 70 самолйота йахӑн пуҫтарнӑ пулнӑ. Республиканцӑсен самолйочӗсем, айалтан вӗҫсе, фашиссен самолйочӗсем ҫине пенӗ. Республикӑ лйотчикӗсем фашиссенне 30 самолйота йахӑн пӗтернӗ, аэродромӗ ҫинче вайлӑ пушар чӗртсе хӑварнӑ. Вара республиканцӑсен самолйочӗсем чиперех хӑйсен базисене таврӑннӑ.

(ТАСС).

Китайри вӑрҫӑ

Октябӗрӗн 14-мӗшӗнче Шанхай фрончӗн пур участкисенче те йапонцӑсен ҫарӗсем активлӑ вӑрҫнӑ. Вӗсем танксем тата броне-автомобилсем пулӑшнипе усӑ курнӑ, тата темиҫе ҫӗр бомбӑ пӑрахнӑ.

Ҫурҫӗр Китайра, Цикоучжен хули патӗнче, китайцӑсен ҫарӗсем пысӑк ҫӗнтерӳ тунӑ, йапонцӑсенне 22 танк тытса илнӗ. Китай ҫарӗсем Лайуан хулине тытса илнӗ (Лайуан хули Хебей провинцин ҫурҫӗр йенчи пайӗнче, Шанси провинцин чиккинчен 15 километрта). Танцзин—Пукоу чукун ҫулӗ районӗнче йапонцӑсен ҫарӗсем октябӗрӗн 14-мӗшӗнче Пинйан станцине тытса илнӗ,—вӑл Дечжоу хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ йенеле 30 километрта. Бейпин—Ханкоу чукун ҫулӗ ҫинче йапонцӑсем Нейпӳ станцине тытса илнӗ.

(ТАСС).

Чехословакире фашисӑма хирӗҫле демонстраци пулнӑ

ПРАГА, октябӗрӗн 14-мӗш (ТАСС). Ҫак кунсенче Микачев хулинче (Карпат леший Украини) „Ҫӗрӗҫ ӗҫхалӑхӗн Сойузӗн“ сийесӗ пулнӑ, Сийес уҫӑлас умӗн нумай халӑхлӑ демонстраци пулса иртнӗ. Демонстрацире 5 пин ытла хресчен, рабочи тата алӑстаҫи пулнӑ. Демонстрацири ҫынсем халӑхсен тӗрекӗ пулса тӑракан ССР Сойузне, паттӑрла испанийе саламлакан лозунгсем ҫӗклесе ҫӳренӗ. „Ҫӗрӗҫ ӗҫхалӑхӗн Сойузӗн“ сийесӗ Карпатлеший Украининчи хресчен сен пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса тӑракан чылай ҫивӗчӗ ыйтусене пӑхса тухнӑ, ҫавнашкалах тата Карпатлешийӗнчи пӗтӗм ӗҫхресченӗсем патне, вӗсене реакципе фашисӑма хирӗҫ кӗрешме, лӑпкӑ саманапа демократине сыхлама пӗрлешме чӗнӳ йышӑннӑ.

ССР Сойузӗнчи суйлав кампанийӗ ҫинчен Китай хаҫачӗсем мӗн ҫыраҫҫӗ

ШАНХАЙ, 15-Х (ТАСС). Шанхайра тухса тӑракан чи паллӑ тата нумай саралакан „Либао“ йатлӑ хаҫат пайанхи номӗрте ССР Сойузӗнче суйлав кампанийӗ пуҫланни ҫинчен умстатйа пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫат ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн ҫитес суйлавӗ пит паха иккенне палӑртат. Ку суйлав, — тесе ҫырат, хаҫат, — тӗнчери чи демократилӗ суйлав саккунӗ тӑрӑх пулат, — ҫак суйлав саккунӗ мӗнле расӑпа националйвӑҫ пулнине пӑхмасӑр суйлас тата суйланас правана пурнӑҫа кӗмеле тӑват; суйлав чӑн-чӑн демократи, буржуалӑ ҫӗршывсенчи демократи текенисенчен пӗтӗмпех ӑрасна, унӑн пӗртен-пӗр тӗллевӗ—халӑхӑн йышлӑ массисене валли ырӑ пурнӑҫ тӑвасси пулса тӑрат.

Ссудӑсене таварса памали ҫӗнӗ йӗрке

Патшалӑхӑн шалти займӗсен облигацийӗсене залога хурса ссудӑ илекен граждӑнсемшӗн меллӗрех пултӑр тесе, ССР Сойузӗн Финанс халӑх комиссариачӗ ссудӑсене таварса памали йӗркене ҫӑмӑллатнӑ.

Иртнӗ вӑхӑтра, ссудӑ илекенӗн ссудӑ укҫине илнӗ перекет кассине хӑйӗн пырса (йе доверенӑҫ тӑрӗх) тӳлесе татмала пулнӑ. Ҫавӑн пек йӗркене пула, ссудӑ илекен облигацисене хӑй пурӑнакан вырӑнта мар залога хунӑ пулсан, кансӗрлӗхсем нумай пулнӑ. Халь ӗнтӗ ссудӑ укҫине ссудӑ илнӗ перекет кассине почтӑ урлӑ куҫарса та, тӳлесе татма йурат. Ссудӑ укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ чухне перекет кассине залог квитанцине йарас пулат, вара перекет касси ссудӑ илекене унӑн адрӗсӗ тӑрӑх, страхланӑ хаклӑ пакетра, облигацисем йарса парат.

Ссудӑ укҫине ссудӑ илекен хӑй пырса тӳленӗ чухне паспӑрт кӑтартасси обйазательнӑ мар. (ТАСС).

Капиталисӑмла ҫӗршывсенчи хресченсен пурнӑҫӗ

(Йулашки)

тисен пысӑк запасӗ пулса тӑнӑ. Курттӑмӑн сутакан йалхуҫалӑх продуктисен хакӗ питӗ хӑвӑрт йӳнелнӗ. Сӑмахран, Америкӑра вӑрҫӑ вӑхӑчӗпе танлаштарсан, виҫӗ хут ытла чакнӑ. Полшӑра та Венгрире те, Балкан ҫурма-утравӗнчи ҫӗршывсенче те, йалхуҫалӑх таварӗсем урӑхҫӗршывсене сутма тӑвакан пур ҫӗршывсенче те—йалхуҫалӑх продуктисен хакӗ йӳнелнӗ.

Хресченсем уйрӑмӑнах йавӑр пурнӑҫа кӗрсе ӳкнӗ. Вӗсем хӑйсем ӗҫлесе тунӑ продуктӑсене сутнӑшӑн ӗлӗкхинчен 2—3 хут йӳнӗ илнӗ. Анчах парӑмсем, налогсем чакман, ӳссе пынӑ.

Хресченсем хӑйсен таварӗсене ирӗксӗрех питӗ йӳнӗ хакпа сутнӑ. Анчах ку хулари ӗҫсыннисем ҫӑкӑра, аш-какайа сӗт-ҫӑва йӳнӗ хакпа илсе тӑни ҫинчен каламаст. Капиталисӑмла ҫӗршывсенче хулари ӗҫсыннисемпе хресченсем хушшинче усламҫӑсем, шултра капиталиссем, харампырсем тӑраҫҫӗ. Ҫавсем ӗнтӗ хресченсене, хулари ӗҫсыннисене ҫаратаҫҫӗ, чухӑна хӑвараҫҫӗ. Вӗсем услам илсе ҫӗс пурӑнаҫҫӗ.

Хресчен йалхуҫалӑх продуктине сутнӑ хакпа хулари рабочи илекен хак хушшинче пысӑк уйрӑмлӑх пур. Америкӑри фермер (хресчен) ҫырла, пахча-ҫимӗҫ питӗ йӳне сутат пулсан, хулари рабочи ӑна лавкара, магазинра виҫӗ хут хаклӑ тӳлесе илет. Мӗншӗн тесен, хресченсенчен йалхуҫалӑх продукцине сутӑн илсе сутакан усламҫӑсем, капиталиссем ҫав продуктӑсен хакне шутсӑр ӳстерсе йараҫҫӗ. Ку Америкӑра ҫеҫ мар, Германире те, Полшӑра та, ытти ҫӗршывсенче те ҫакӑн пекех.

Хресчене хулари потребитель хушшинчи пӗрремӗш сыпӑк скупщик, йулашки сыпӑкӗ ваккӑн суту-илӳ тӑвакан усламӑҫ пулса тӑрат. Вӗсем хушшинче курттӑмӑн суту-илӳ тӑвакансем, агентсем, комиссионерсем, маклерсем, транспӑрт обществисем, фабриксем, складсем, елеватӑрсем, банкӑсем тӑраҫҫӗ.

Ҫапла вара хресчен тырпул тӑвас тесе ҫулталӑкӗпе ӗҫленӗшӗн, вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетесшӗн темиҫе ҫул ӗҫленӗшӗн нимӗн чухлӗ те тупӑш илеймест. Хресчен хӑйӗн вӑйне хурса ӗҫленӗ тупӑш харампырсен аллине кайат. Патшалӑх, улпутсем, ростовщиксем йалхуҫалӑх кризисӗпе хресченсене тата хытӑрах експлоатацилеме усӑ кураҫҫӗ.

Ҫӗр тара илнӗ хресченсем уйрӑмах йавӑр пурнӑҫа кӗрсе ӳкнӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн, вӗсем ҫӗрсене питӗ хаклӑ тӳлесе тара илнӗ. Кризис условийӗсенче вӗсем ҫӗр тара илнӗшӗн кӗнӗ парӑма тӳлеме пултарайман. Вӗсене хӑйсен ҫӗр участкисенчен хӑваласа йанӑ, пурлӑхӗсене нимӗн хӑвармиччен сутса пӗтерме тытӑннӑ.

(„Крестьянская газета“ хаҫатран).

Китайри вӑрҫӑ.

Йапони самолйочӗсем Шанхайӑн кӑнтӑр вакзалне бомбӑсем пӑрахса аркатнӑ чух, нумай ҫуртсем ваннӑ тата чылай ача-пӑчасем вилнӗ, аманнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Санитарсем бомбӑсем пӑрахнӑ чух вилнисене илсе кайаҫҫӗ.

(Сойузфото)

Испани пӑлхавҫисене пулӑшма Италирен ҫӗнӗ ҫарсем пынӑ

ЛОНДОН, октябӗрӗн 15-мӗш (ТАСС). Англи хаҫачӗсем Испани пӑлхавҫисене пулӑшма Италин ҫӗнӗ ҫарӗсем пыни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. „Дейли Геральд“ хаҫат октябӗрӗн 14-мӗшӗнче пӗлтернӗ тӑрӑх, иртнӗ эрне вӗҫӗнче Итали ҫар тумӗпе тумланнӑ 6—7 пин салтакран тӑракан Итали ҫарӗсем Кадиксӑна пынӑ, вӗсене васкасах Севилйӑна йанӑ.

Норвегире Октябӗрти Аслӑ социалисӑмла революци ҫирӗм ҫул тултарнине уйавлама хатӗрленеҫҫӗ

СТОКГОЛЬМ, октябӗрӗн 14-мӗш (ТАСС). Норвегин „Арбейдербладет“ йатлӑ хаҫачӗ Норвегири чылай деятельсем октябӗрти Аслӑ социалисӑмла революци ҫирӗм ҫул тултарнӑ уйав тӗлне Совет Сойузне саламлӑ пысӑк адрӗс хатӗрлени ҫинчен пӗлтерет. Ку деятельсем ҫавнашкалах Совет Сойузӗн ҫирӗм ҫул хушшинчи ҫитӗнӳвӗсем ҫинчен кӑтартакан выставкӑ хатӗрлеҫҫӗ.

„Арбейдербладет“ хаҫат Аслӑ социалисӑмла революци ҫирӗм ҫул тултаракан уйава хатӗрленни ҫинчен „Совет Сойузӗнчи халӑхсене ҫеҫ мар, пӗтӗм ҫӗршывсенчи лӑпкӑ саманапа цивилизаци тусӗсен те ку историлӗ тата манмала мар куна уйавламала“, тесе ҫырат.

Словакире чылай хуласенче Чехословакири коммуниссен партийӗ фашисӑмпа тата реакципе кӗрешес, лӑпкӑ саманапа демократийе сыхлас тата паттӑрла Испанине пулӑшу парас лозунгсемпе организацилевӗ нумай пин ҫынлӑ демонстрацисем пулса иртнӗ.

Машинпа трактӑр станцисен ҫӗнӗ директӑрӗсем

Йулашки ҫулталӑк хушшинче машинпа трактӑр станцисен директӑрӗнче ӗҫлеме 200 йахӑн колхоз председателӗсене, трактӑр отрйачӗсен бригадирӗсене, МТС механикӗсене тата агрономсене лартнӑ. Вӗсем хушшинче 56 колхоз председателӗ. Ҫак ӗҫ машинпа трактӑр станцисен руководствине хӑйсен участкисенче стахановла ӗҫӗн образецне кӑтартнӑ йалхуҫалӑхӗнчи чаплӑ организатӑрсемпе, партири тата партире мар большевиксемпе ҫирӗплетес задачӑпа ҫыхӑннӑ.

Пысӑкрах ӗҫе лартнисем хушшинче орденоносцӑсем нумай. Тутар республикӗнчи Столбищенскӑри Машинпа трактӑр станци директӑрне республикӑри чи аван ӗҫлекен тракторисне Гусев йулташа лартнӑ. ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ Гусев йулташа отличнӑ ӗҫленӗшӗн Ленин орденӗ панӑ. Тутар республик правительстви ӑна грамӑтапа ҫӑмӑл автомашинӑ парса парнеленӗ. Йулашки вӑхӑтра Гусев трактӑр отрйачӗн бригадирӗ пулса ӗҫленӗ.

(ТАСС).

Пуйан, культурӑлӑ пурӑнӑҫ

ТБИЛИСИ, октябӗрӗн 15-мӗш (ТАСС). Ортачал пригородӗнчи нумай нацилӗ колхозра грузинсем, армйансем, грексем, осетинсем, азербайджансем пӗр тӑванлӑ тата пуйан пурӑнаҫҫӗ.

Пурнӑҫ йусанса аванланса пынипе (колхоз пирвайхи ҫур ҫултах 1.639.000 тенкӗ тупӑш илнӗ) колхозниксен культурипе политикӑла пӗлӗвӗ те ӳсет. Иртнӗ ҫул кунта ҫӗр ҫына йахӑн хутла пӗлменни пулнӑ, халӗ вӗсем 23 ҫеҫ йулнӑ. Вӗсем те октябӗр уйавӗ тӗлне хӑйсен тӑван чӗлхипе вулама, ҫырма тытӑнаҫҫӗ.

Парти кабинетӗнче икӗ пин тома йахӑн политикӑ тата илемлӗ литературӑ кӗнекисем пур. Кунта кашни кун икҫӗр екземплйара йахӑн хаҫатсемпе журналсем пыраҫҫӗ. Колхозниксем хӑйсене валли 200 ытла пӗчӗк библиотекӑсем туйаннӑ. 425 колхоз семйи пӗр татти-сыпписӗр республикӑра тухакан „Коммунист“ тата „Заря Востока“ хаҫатсене илсе тӑраҫҫӗ.

Пӗтӗм ачасем шкула ҫӳреҫҫӗ. 90 пӗчӗк ача колхозри ачасен йаслипе садне кайаҫҫӗ.

Колхоз кӑҫал мухтанма тивӗҫлӗ 700 ҫын вырнаҫмалӑх пысӑк клуб тунӑ. Кунта колхозник кашни кун пырса савӑнат, ӑна валли кунта кино, лекцисем, спектакӗлсем, калаҫусем пулаҫҫӗ. Клуб ҫумӗнче спектакль лартма, ҫар ӗҫне вӗренмели тата ытти кружоксем, хӑйсен духовой тата струн оркестрӗсем пур. Йатарласа спорт городокӗ тунӑ. Кунта ҫӗршер колхоз ҫамрӑкӗсем физкультурӑ ӗҫне вӗренеҫҫӗ.

Халӗ колхозниксем Аслӑ Совета суйлама тата Аслӑ социалисӑмла революци ҫирӗм ҫул тултарнӑ уйава лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Уйхирти стансенче, бригадӑсенче ҫӗнӗ суйлав саккунӗ ҫинчен калаҫусем пысӑк интереспа иртеҫҫӗ. Колхозра политкун туса иртернӗ. Ҫӗнӗ суйлав саккунне кружоксенче тӗплӗн вӗренеҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчере мала тухассишӗн пыракан Ейвепе Алехин хушшинчи шахмӑт матчӗ

Октябӗрӗн 14-мӗшӗнче Гаагӑра пӗтӗм тӗнчери шахмӑт чемпионӗ Ейвепе Алехин пиллӗккӗмӗш хут тӗл пулса выляна. Матч 3:2 шутпа Ейве ҫӗнтернипе пырат.

Шашкӑ-шахмӑт

Студентсен турнирӗ

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче Шупашкарти педагогикӑ рабфакӗнчи студентсем хушшинче шашкӑ-шахмӑт турнирӗ пуҫланчӗ. Турнира 30 студент хутшӑннӑ. Шашкӑ турнирӗнче икӗ тур хыҫҫӑн та III-мӗш „В“ курсра вӗренекен Васили Федоровпа Иосиф Макаров студентсем малта пыраҫҫӗ.

Галкин, Йефимов.

Столовайри ҫитменлӗхсем

Чӑвашторгӑн Канашри уйрӑмӗн 3-мӗш № столовайне кӗрсе куртӑмӑр.

Пӗрер стакан чей ӗҫес килнипе Николайевӑ буфетчицӑран шур ҫӑкӑрпа чей пама ыйтрӑмӑр. Пире телей шурӑ ҫӑкӑр ҫук. Чей илтӗмӗр. Пахатпӑр, стакан тӗпӗнче 5 мм. ытла лӗкӗ ларса тулнӑ. Ку ӗнерхи чей йулашки пулнӑ мӗн.

Ҫӑкӑр турттармали тарасана курсан тӑкам та йӗрӗнмеле, тутӑхса пӗтнӗ. 1929 ҫулта клемит тунӑскер (саккун тӑрӑх 2 ҫулта пӗрре клемит тумала). Пуканӗсем те клемит тунин срукӗ тухнӑскерсем. Кӑна Канашри милици уйрӑмӗн тӗрӗслемеле пулнӑ.

Апат ҫийес пахалӑхне йусас тӗлӗшпе столовӑй пуҫлӑхӗн Угаровӑн тӑрӑшмала. Тырӑ пама пыракан колхозниксемшӗн лартнӑ столовӑйӑн пурте пулма кирлӗ: шурӑ ҫӑкӑр, булкӑсем т. ыт.

И. Рйазанов.

ТЕМТЕПӖР

Чукоткӑ йуррисем

Ҫурҫӗр тинӗс ҫулӗн политуправленийӗ „Анадырь“ пӑрахутпа йанӑ концерт бригади Чукоткӑна пырса кайнӑ. Бригадӑра: симфонилӗ квартет, йурлакансем, байаниссем, ташӑҫсем, илемлӗ сӑмах маҫтӑрӗсем пур.

Артиссем полйарниксене тата Провидени бухтипе Шеларски сӑмсахӗ ҫинчи вырӑнти халӑха, ҫавӑн пекех Врангӗл утравӗ ҫинче те концертсем лартса панӑ.

Ҫав вӑхӑтрах бригадӑ чукчасемпе ескимоссен хореографилӗ пултарулӑхне ҫырса илнӗ. Чукоткӑ йуррисене фонографпа ҫырнӑ, вӗсене граммофон пластинкисем ҫине куҫараҫҫӗ.

Проведенн бухтинчи ескимоссем, концерт бригади килнӗ йатпа, харпӑрхӑй пултарулӑх концертне организациленӗ, концертра ескимоссен халӑх йуррисемпе ташшисем пулнӑ.

(„Тихоокеанская звезда“).

Вӑйлӑ мотоцикл

Ижевскри завод ИЖ—8 текен ҫӗнӗ маркӑлӑ мотоциклетсене массӑлӑн туса кӑларма пуҫланӑ. Ҫак машинӑ хальччен кӑларакан ИЖ—7 мотоциклетсенчен тем терийех вӑйлӑ.

ИЖ—8 мотоциклӑн вӑйӗ 7,5 лаша вӑйӗпе танлашат (хальччен хисем 6 лаша вӑйлӗ пулнӑ), тул йенчен пӑхма та илемлӗ, електрооборудовани лайӑх ӗҫлет. Унӑн хӑвӑртлӑхӗ пӗр сехетре 100 километра йахӑн.

Ҫулталӑк вӗҫнеле завод ҫакӑн пек мотоциклетсене темиҫе ҫӗр штук туса кӑларма шутлат.

(„Горьковский рабочий“).

20 ҫул иртсен

Сталинград облаҫӗнчи Ольховкӑ йалӗнчен Ленинградри уголовнӑй розыска ҫыру килнӗ. Ф. А. Козлова—Свинцова, милицин розыск пайӗ 18 ҫул хушши пӗрпӗринпе ҫыхӑну тытмасӑр пурӑннӑ ҫемйе членӗсене тупма пулӑшни ҫинчен хаҫатсем ҫинче вуласа пӗлнӗ хыҫҫӑн, хӑйӗн шӑлнӗсемпе йӑмӑкӗсене тупма пулӑшма ыйтнӑ.

20 ҫула йахӑн кайала, Октябӗр революци хыҫҫӑнах, Козловсен пысӑк семйи пӗтӗм Совет ҫӗршывӗ тӑрӑх сапаланса пӗтнӗ. Ф. Козловӑ пуринчен ытла хӑйӗн Федор йатлӑ шӑльнӗне тупасшӑн пулнӑ. Манӑн шутпа Федор Ленинградра пурӑнат пулмала тесе ҫырнӑ вӑл. Чӑнах та, Ленинградра пурӑнакан 250 Козловсем хушшинче унӑн шӑльнӗне—Федор Андрейевича шыраса тупнӑ, вӑл Ногин йачӗпе тӑракан фабрикӑра рабочи пулса ӗҫленӗ.

Ф. А. Козлов хӑйӗн аккӑшне 1917 ҫултанпа курман, вӑл вилнӗ пулӗ тесе шутланӑ. Хӑйӗн аслӑ аккӑшӗ чӗрӗ пурӑнни ҫинчен пӗлсен, вӑл ҫав тери хытӑ савӑннӑ. Козлов ӑна ытти тӑванӗсен адрӗсне пӗлтернӗ. Ҫапла вара, Ф. Козлова, 20 ҫул иртсен, хӑйӗн сывӑх тӑванӗсене тупма пултарнӑ.

(„Ленинградская правда“).

Суйа инспектӑр

Кӑҫалхи августпа сентябӗр уйӑхӗсенче Шупашкарти милици управленине нумай ҫынсенчен—велосипедсем тупса паратӑп тесе улталаса укҫа илсе кайни ҫинчен, зайавлевисем пынӑ. Халӗ ҫав асӑннӑ приступнике тытнӑ. Вӑл Йӗпреҫ районӗнчи Климово йалӗнче ҫуралнӑ Димитрий Васильев йатлӑскер. Ҫак ӗҫ пирки тӗрӗсленӗ тӑрӑх, Васильев ҫак виҫӗ уйӑх хушшинче ниҫта та ӗҫлемесӗрех хӑйне Чӑвашторгӑн инспектӑрӗ тесе, Чӑвашторг складне килнӗ велосипедсене пама пулса, нумай ҫынсенчен аванс укҫа илнӗ, хӑшӗсенчен велосипед хакӗ чухлӗ пӗтӗмпех илнисем пулнӑ. Укҫине илсен велосипедне илме тепӗр кунне хватерне йе склада суйа адрӗспе пыма хушнӑ.

Ҫак майпа Васильев Толстовран—250 тенкӗ, Акрамовскинчен—160 т., Мастеровран—250 тенкӗ, Васильевран—50 т., Йаковлевран—100 т., тата костум тӑрататӑп тесе Ухлеткинран—137 тенкӗ илнӗ.

Илнӗ укҫапа виҫесӗр ерех ӗҫсе йаланах арӑмӗпе киле пырсан вӑрҫнӑ, ӑна вӗлерессипе хӑратса хӗненӗ. Хулара хулиганланса ҫӳренӗ.

Халь Васильева тытса хупнӑ. Ӑна Уг. К. 169 статйин 2-мӗш пайӗпе тата 146 статйипе айӑпласа суд умне тӑратаҫҫӗ.

Халӑх тӑшманӗсене персе вӗлерме ыйтаҫҫӗ

ТРАК. Супарти „Партизан“ колхозра Игнатйев ушкӑнӗ виҫӗ ҫул хушши сӑтӑр туса пурӑннӑ. Ҫав тӑшмансем кӑҫалхи сентябӗрӗн 5-мӗшӗнче колхоза калама ҫук пысӑк сийен турӗҫ: итем ҫинче пушар туса колхозӑнне 16 капан ыраш, 16 центнер урпа, 16 лав ҫапнӑ улӑм ҫунтарса йачӗҫ. Тӑшмансене преступлени тунӑ ҫӗртех тытнӑ.

Халӑх тӑшманӗсен ҫак тискер те ирсӗр ӗҫӗ Трак районӗнчи колхозниксене питӗ хытӑ тарӑхтарса йачӗ. Районти колхоз председателӗсен йатарласа пухнӑ канашлувӗ пӗр сасӑпах ҫапла йышӑнчӗ: „Партизан“ колхоз итемӗнче пушар туса тырпула ҫунтарнӑ етемсене, вӗсене халӑхӑн чи усал тӑшманӗсем тесе шутласа, персе пӑрахмала“, —терӗ.

Г. Закамски.

Тата мӗне кӗтеҫҫӗ-ши?

ЙӖПРЕҪ. ССР Сойузӗнчи Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет йышӑннӑ тӑрӑх, кӑҫалхи декабӗрӗн 12-мӗшӗнче суйлав пулса иртмеле. ССР Сойузӗн суйлав кампанийӗ октябӗрӗн 12-мӗшӗнчен пуҫланчӗ.

Ҫакна Йӗпреҫри заготскот пунктӗнче ӗҫлекенсем нимӗн чухлӗ те туймаҫҫӗ. Заготскот пункчӗн пуҫлӑхӗ А. Саттин суйлав Положенине вӗренмели кружок тӑвасси ҫинчен шутласа та пӑхмаст. А. Саттин хӑйӗ те суйлав Положенийӗ ҫинчен нимӗн те пӗлмест.

Заготскотри пуҫлӑхсем суйлав Положенине вӗренессине политикӑла ӗҫ вырӑнне хумаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех Йӗпреҫри ҫу заводӗнче ӗҫлекенсем те суйлав Положенине вӗренме тытӑнман. Кунга та вӗренӳ ҫине куҫ айӗпе ҫеҫ пӑхса лараҫҫӗ.

Г. Мирушев.

Симушин сутӑчнӑй ыйтат

ИШЛЕЙ. Кивҫурт Маркари алӑсалӑх ертелӗн культработникӗ Ф. Симушин ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленес тӗлӗшпе тата суйлав Положенийӗ ҫинчен ӑнлантарса парас йенӗпе нимӗн те тумаст. Ҫатра Марка йал халӑхӗн пухувӗнче „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ вӗренме 2 кружок организацилерӗҫ. Пӗр кружокӗпе йертсе пыма Симушина, тепӗр кружокӗпе йертсе пыма Христофорова уйӑрса пачӗҫ. Ку тарана ҫитсе вӗсем пӗр калаҫу та, пӗр занйати те туса иртермерӗҫ.

Симушин культработник патне йалсовет председателӗ Павлов пырса занйатисене мӗншӗн иртермени ҫинчен ыйтсан, ӑна хирӗҫ Симушин—„Есӗр мана кружоксемпе ӗҫленӗшӗн сутӑчнӑй тӳлеместӗр вӗт, ҫавӑнпа епӗ сире итлесшӗн мар“,—тесе ответлет.

Ҫав вӑхӑтрах вӑл йалан ӳсӗр ҫӳрет, йалан арӑмне хӗнет.

Г. Шумилов.

Ответлӑ редактӑр П. И. ИВАНОВ.

Нойабӗр тата декабӗр уйӑхӗсемшӗн

„СПУТНИК АГИТАТОРА“

ЖУРНАЛА]

кирлӗ таран ҫырӑнса илме пулат.

ХАКӖ пӗр уйӑха—90 пус.

Почтальонсем, подпискӑ пухакансем урлӑ тата Сойузпичетӗн уйрӑмӗсенче ҫырӑнса илмеле. Укҫине октябӗрӗн 23-мӗшӗчен хывмала.

СОЙУЗПИЧЕТ.

Заготзерно Пӗрлешӗвӗн Чӑваш республикӗнчи кантурне

КИРЛӖ

Шупашкарти кантурӗнче ӗҫлеме:

Оперативлӑ учотӑн начальникӗ — 1.
Бухгалтер-ревизор — 1.

Районсенче ӗҫлеме:

Пахалӑх йенӗпе ӗҫлекен техноруксем — 4.
Аслӑ бухгалтӗрсем—3.

Заготзерно кантурӗнче ыйтса пӗлмеле, Калинин урамӗ, 83.

Вӑрнарти фосфорит савӑтне

Шоферсем, локомобиль машинисӗсем, слесӑрсем тата електромонтерсем

КИРЛЕ

Хватерсем пур

Завод управленийӗ

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫырӑнса илмели хак эм: 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха —2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 781. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиза. Заказ № 2193. Тираж 11100. П.Ка—92 см. н. н.